26-131

Х-7

ХУММА ÇЕМЕНĔ

# КОМСОМОЛ КĂЛАВĔСЕМ

Ђăваш Республĕкĕнђи Кĕнеке Кăларакан Уйрăм
ШУПАШКАР — 1926

ХУММА ÇЕМЕНĔ

# КОМСОМОЛ КАЛАВĔСЕМ

ЂĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УРЙРĂМ

ШУПАШКАР—1926

Типография
„Чувашская Книга“
Б.-Советская 6.

Чувашлит № 442 Напеч. 5000 экз.

## Пирĕн вăй!.. вăй!..

Куçук пайан шкултан, темшĕн, пит хĕпĕртесе, çутăлса килђĕ.

— Мĕншĕн апла пит хĕпĕртерĕн-ха? Ай комунсем шурă кулађă çитерсе йађĕç-и мĕн? терĕ ăна тĕпелти сак çинђе кăнђала арласа ларакан амăшĕ.

Куçук вунултă çулхи ађа, йалти сакăр çуллă шкулта вĕренет. Раççейри Çамрăксен Комунисла Сойусĕнђе тăраť. Сойусра тăнине ашшĕ малтанах пĕлменђђĕ, кайарахпа тин пĕлнĕ. Пĕлнĕренпе вара Куçука шутсăр курайми пулђĕ. Амăшĕ те пĕрмай „комун“ тесе тăрăхлама йуратаť.

Куçук амăшне хирĕç халĕ çапла каларĕ:

— Хĕпĕртемесĕр ара, анне!.. Пăх-ха есĕ, епĕ шкултан пĕр кĕнеке илсе килтĕм. Карттинĕсенђен ытла та кулмалла: пупсене ўкернĕ; пĕр пупĕ тепринпе ђиркўре пухнă укçашăн вăрçса кайнă, иккĕшĕ те пĕр-пĕрин çўçĕсенђен йарса илнĕ, вăкăрсем пекех сĕкĕшеççĕ; тепри тата килĕнђе стрепкине ыталанă та—хытă ђуп тăваť, çуллă куçĕсене саркаласа, выђатса анђах тăраť; виççĕмĕшĕ ĕçсе ўсĕрĕлнĕ те: Мĕн усси пур сантан, вилĕскертен? Хам тăрăшмасан, выçах вĕлерен есĕ мана! тесе кĕтесри турăшĕ çине лăђ-лађ сурма тытăннă... Ах, анне! Хăвах килсе пăх-ха есĕ: тем те... тем те ўкернĕ!..

Амăшĕ, ывăлĕ апла каласанах, шăрт-шарт сиксе хăранă пек пулаť. Çавăнтах Куçука сиввĕн пăхса илет.

— Турă çырлахтăрах! Мĕн калан есĕ, ухмах? Кĕтесри турăран хăра пăртак! Мĕн çавăн пек кĕнекесем илсе килмелли пур? Кўр кĕнекўне: халех çунтарса йарам, çын ан куртăр...

— Çунтарма йурамасť, тўлеттереççĕ, тет Куçук.

Амăшĕ урăх ђĕнмерĕ, упăшки çинелле пăхайса илђĕ.

Ашшĕ алăк патĕнђе çăпата хуçса лараť. Ывăлĕне амăшĕ калаçнине итлесен-итлесен, вăл хыттăн кăшкăрса пăрахрĕ:

— Сысна! терĕ Куçукне.—Ыранах шкула йамастăп, килтех пурăн, усал çури!..

Куçук ним те шарламасť, карттинĕсенех пăхма хăтланаť.

Çавăнпа ашшĕ татах çиленсе çитрĕ. Куç шуррисене çавăрса пăрахрĕ. Аллисене тăр-тăр ђĕтретсе хыттăн ђăмăртаса илђĕ. Пиђĕсем хĕрелсе карĕç. Унтан, ывăлĕ çаплах ним те ђĕнменнине кура, ура çине йарт сиксе тăђĕ те, пĕр çинçе пушăтпа Куçука питĕнђенех вирлĕн çапса илђĕ.

Куçук макăрса йађĕ, анђах каллах ним сăмах та ђĕнмерĕ.

Амăшĕ çапах ывăлĕ хутне кĕрен пек пулаť.

— Ан тив, Кĕркури! Тен, хăйех тўрленĕ-çке, тет вăл.

Кĕркурийĕ, Куçук хаљ те аллинђен кĕнекине пăрахманнине курсан, пушшех урса çитрĕ. Çӳç пуçĕсем шăрт пекех т ă р с а карĕç. Кĕтесри турă ывăлĕпе Микулай çветтуй сăнĕсем çинелле пăхса-а илђĕ те, турăсем ăна иккĕшĕ те пит хайаррăн курăнса карĕç.

— Ђар ывăлна, ђар! тенĕ пекех туйăнђĕç. Кĕркури вара, турăсен кăмăлне кӳрес тесе, сĕтел патĕнђе макăрса тăракан Куçука çамкинђенех калăплă çăпатапа йара пађĕ.

Куçук çĕре анраса ӳкрĕ. Макăрмарĕ, тумарĕ. Йăваш кăвак куçĕсене те ним сиктермесĕр çӳлелле пăхса выртрĕ.,. Вилнĕ пек пулђĕ.

Çийĕнђен ашшĕ:

— Вил пĕрех хут, çăва патне кайманскер! Пур пĕр ырри пулас çук сиртен, тесе хуђĕ.

„Сиртен“ тесе вăл, пĕр Куçук çинђен анђах мар, Сойусра тăракан йалти ытти ађасем çинђен те каларĕ. Ун пек ађасене вăл пурне те кураймасť.

Куçук ашшĕ те, тата ыттисем те,—пурте ађисене Сойусра тăнăшăн вилĕм сунаççĕ. Пурте хăйсен ађисем çинђен:

— Кайђђăр çăва патне! Вĕсем пирĕн ађасем мар,—антихрис ађисем, антихрис вĕсене кĕлеме çапса кайнă, теççĕ.

Ним сасăсăр ђылай анраса выртсан, Куçук куçĕсем çапах та тем çине,—ашшĕ те, амăшĕ те пĕлмен йапала çине,—хĕпĕртесех, шансах пăхнă пек пулђĕç; пĕрре пĕр йеннелле, тепре тепĕр йеннелле

хуллен, сисёнкёсёр выђанса илђёç; пўртре мён пулнине, çамка çине калăп çапăннине пёлмен, курман пек пулса айаккалла шутарса йарасшăн пулђёç...

Анђах калăп ыраттарни куççене çёнтерсе илђё илђех... Куçук тўсеймерё: аллинђи кёнекине пăрахмасăрах ўпкелешсе йăнăшма, макăрма тытăнђё.

— Епё ним те усал ёç туман. Йађђейккăна кайса пёлтеретёп... йе йал советне... Ним айăпсăр хёнеме, вёлерме саккун çук, терё вăл ашшё çинелле пăхса.

Ашшё пушшах, паçăрхинђен те хытă тарăхса, туллашса карё.

— Сана пёрре пуçна çапса çёмёрем, мёнле вăл, — ашшёнђен иртсе кайма пуçланă!.. Пăрах аларан антихрис кёнекине... Пăрах, тетёп!

Куçук пăрахмасŤ...

Ашшё пўлёме хупса хунă арăслан пекех хайарланса çитрё. Урайёнђе так ахаљ тапăртата пуçларё.

— У ух-х! тесе шăлёсене хăйраŤ.

— Вёлереп сана! терё те, каллах Куçук çурăмне калăплă çăпатапа туйантарђё.

— Кай çăва патне, тухса кай ђасрах!.. Кай!.. Кай!.. тесе Куçука алăкранах тапа-тапа, ђышкăнтара-ђышкăнтара кăларса йађё.

## II.

Амăшё Куçук хутне кёрен пек туса та ним те тăваймарё. Пёр сăмаххипе анђах хута кёни пулђё.

— Ма çапатӑн, Куçука? Хамӑр аҫах вӑл, çыннӑн мар. Тен, хӑйех тӳрленсе кайӗ. Хаҫ ытла та çамрӑк вӗт. Çамрӑк турат вӑл авкаланма йуратаҭ, терӗ упӑшкине.

Урӑх Куçукшӑн ним тума та пултараймарӗ. Хӑй те вӑл ку таранҫҫен упӑшки ирӗкӗнҫен тухайман. Упӑшкине итлемесен, ӗç вӑл хушнӑ пек пулмасан, Куçук амӑшӗ хӑй те упӑшкинҫен нумай тӳскеленӗ.

Куçука çапла кӑларса йани ӑна хурлантарҫӗ.

— Мӗн ухмахланан-ши есӗ, Кӗркури? терӗ вӑл упӑшкине.—Йалта пирӗн Куçук пӗҫҫен анҫах мар вӗт,—çирӗм аҫа та ытла, теççӗ вӗсен парттинҫе! Мӗн хуйхӑрмалли пур-ха уншӑн? Вӗлерес пулсассӑн та, паҫ пирӗн киле килсе вӗлерес çук, çирӗм килӗ пӗтӗмпех пӗтмелле пулаҭ. Вилес пулсан та тата халӑхпа, мирпе вилетпӗр,—çирӗм кил сахалах мар вӑл!.. Хуҭ те хӑçан та пӗрре вилесех пулаҭ. Мӗн уншӑн хӑраса хамӑр аҫана çапмалли, хӗнемелли пур? Çӳреҫҫӗр хӑйсен ӑсӗпе, хӑйсем пӗлнӗ пек...

Куçук амӑшӗ калама ҫарӑнҫӗ. Сак çине хунӑ йӗкине алла тытрӗ те, паçӑрхин пекех, пӗтӗр-р-р! пӗтӗр-р-р! пӗтӗрме тытӑнҫӗ.

Упӑшки пӗр сӑмах та ҫӗнмест...

Куçук амӑшӗ татах темскер каласшӑн. Ҫӗлхи вӗçне çӗнӗрен çӗнӗ сӑмахсем пырса тӑраççӗ... Акӑ вӑл ҫӑтаймарӗ, каласа та йаҫӗ.

— Тен, ӑçта пӗлен, вӗсем те ахалех хӑтланмаççӗ пулӗ? Ахӑртнех, вӗсем хут вулама пӗлеççӗ, мӗн

çырнине пурне те вулаççĕ. Çавăнпа суйипе ђăннине те уйăраççĕ пуљ çав?.. Епĕр мĕн пĕлетпĕр? Пĕр сăмахне те тăнăшаймаспăр. Пирĕншĕн пулсан, хуť çырнă хут пултăр, хуť ахаљ хăмах—иккĕшĕ те пĕрех. Вулађђăр, çўређђĕр, хăйсен ирĕкĕ. Ах, ма йатларăм-ши епĕ Куçука темле ниме кирлĕ мар кĕнекишĕн? Епĕ шарламан пулсан—ним те пулас çукђĕ... Ах, ухмах! Ма шарларăм-ши вара? Вулатăр, куртăр пулаťђĕ карттинĕсене.—Пупсем çапла, çапла,—тенĕрен каласа йатăм пулас та ăна, сăмахне...

Куçук амăшĕ каллах ђаранђĕ. Темле йурамисĕр сăмахсем персе йарасран хăраса илнĕ пек пулђĕ. Ђўређерен пăхрĕ те, хĕвел каç йеннелле сулăнни, хурăнсемпе йăмрасем çинелле шуса çитсе çуттисем ђўређе йанаххи çине ўкни, тата урамра хĕр-ўпăраçсем витресемпе ђăнкăртаттарса шыва кайни, арçынсем çырмаран лашасем шăвара-шăвара улăхни курăнах карĕ. Анђах Куçук амăшĕн татах каласси килет, татах ђĕлхе вĕçне темле сăмахсем пыра-пыра тăраççĕ. Куçук амăшĕ сăмахсене тытса тăраймарĕ: каллах хăй тĕллĕнех сăмахлама пуçларĕ.

— Тепĕр йенђен тата, шухăшларах пăхсан, ђăнах та ним суйи те, ним măшкăлани те çук пулĕ унта?.. Куçук кĕнеки çинђенех калатăп та-ха епĕ... Пупсем укçашăн каснине, пуп хырăмĕ нихăçан та тăранайманнине такам та пĕлетпĕр ĕнтĕ. Ђиркўри укçашăн тўпелешни вăл ђăнах та пулма пултараť... Унтан тата, пуп хăй стрепкине анђах ђуп тумасť пулĕ? Тахăшне те ђуп тăваť пулĕ... Акă Леш-касси

пупнех илем-ха. Мĕн-мĕн каламаççĕ-ши ун пирки? Хăй майрипе пурăнмасть, теççĕ. Шкула, хĕрарăм уҫитлĕ патне çӳрет, теççĕ. Тата Хĕветĕр салтак арăмĕпе тытнине те калаççĕ. И-х! Пурне те каластăк—каласа та пĕтереймĕн. Кулмаллах çав ĕнтĕ ун пек пупран. Уншăн аҫана ним те айăпламалли çук... Ӳсĕр пуп турăшран кулнипе ун çине сурни çинҫен,—турă çырлахах (сăхсăхса илет),—калама та хăрамалла. Ун пек пуп, пулсассăн та, тамăка каймалли çеç пулĕ... Шухăшласан тата, пулмĕ те тес çук, ӳсĕр çын тем те хăтланма пултарать. Пупĕ те ахаҫ етемех пулĕ çав, çветтуй таврашех пулас çук...

Куçук амăшĕ халапне татах та нумайа тăсаҫҫĕ пулĕ. Йĕкине пăрахнă та, пĕрмай калать... Калать, татах калать. Сăмахлама йуратаканскер, нихăçан та сăмахран аптăрас çук. Анҫах ку хутра упăшки хăратсах ҫарҫĕ. Куçукне пӳртрен кăларса йарсанах, Кĕркури, ăшҫикне пит тултарса çитернĕскер, алăк патĕнҫи кунтăк сакки çине, темскер ĕç туса ывăннă пекех, лашт ҫăсăлса выртрĕ.

— Ах, ку мур аҫине! терĕ вăл ăшĕнҫе. Унтан арăмĕ ӳпкелешнине выртнă çĕрте итлекелерĕ, анҫах хирĕç тавăрса пĕр сăмах та каламарĕ. Халĕ тин, арăмĕ темскер хăй халапне йама тытăнсан, Кĕркури ҫăтса тăраймарĕ.

— Молҫать! терĕ арăмне.

Арăмĕ çавăнтах хăраса ӳкрĕ, сăмахлама ҫарăнҫĕ.

— Ăçта есĕ темскер те пĕр çинҫен калаçма тытăннă? Ай есĕ те „комун“ пуласшăн-и? Пăртак

ђёлхӳне çыртас пулаť, атту ытлашши вăрăмланса кайнă...

Арăмĕ те ђăтаймарĕ.

— Мĕн, епĕ ним те ытлашши каласмарăм-çке! Ай манăн калаçма та ирĕк çук-и! Калаçма ђёлхе панă пулĕ тетĕп...

Ђипер кунťăк çинђе выртакан Кĕркури, арăмĕ апла хирĕçле каланă пек пулсанах, сасартăк ура çине сиксе тăђĕ те, хăратмалла сасăпа каллах:

— Молђаť! терĕ.

Арăмĕ вара, упăшкинђен пит хăрама вĕреннĕскер,—тем, хĕнеме пуçлаť пулĕ тесе,—çинçерех сасăпа: Ай, хура-а-х-х!! тесе хыттăнах çухăрса илђĕ.

Кĕркури арăмĕ çине, Куçук çине çиленнĕ пекех, тарăхса, çиленсе карĕ. Çавăнтах хайхи калăплă çăпатине йарса илђĕ те, арăмĕ çинелле вăр-р! ывтăнтарса йађĕ. Калăплă çăпата Куçук амăшĕн сылтăм хулпуççине пырса çапăнђĕ.

Куçук амăшĕ:

— У-у-у!!! улама тапратрĕ... Кил хапхи уçăлса пĕр çын килнине курсан çеç, уласа йĕме ђарăнђĕ.

## III.

— Ман килес... Мĕн çĕмĕрлетĕр?

— Хамăр епир... Кунĕ çавăн пек пайан... Çĕмĕрелмелли кун...

— Мĕн апла?

— Хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ, Лариван. Хађхи ађапăђа пĕтĕм кил ăшђиккине пăсаť, ним тума та çук,

ирĕксĕрех çĕмĕрлес пулаť, вăрçас та пулаť... Ах, ку усал саманана!..

Петĕр Ларивенĕпе Кĕркури ђасах халапа хĕртрĕç. Куçук амăшĕ те çын умĕнђе лăпланса каллех йĕкине тытрĕ.

— Ађа-пăђана ăна ђарас пулаť. Ђармасан пăсăлса кайаççĕ, ђарас пулаť, тет саттурлансах Петĕр Ларивенĕ.

— Ђармаллăхах ним те туман-ха та ађи... Пĕр çав кĕнеки пирки анђах тапранса карĕ. Кĕнекине вăл çапман вĕт, тет Куçук амăшĕ.

Ывăлĕ хутне кĕрсе калаçни Кĕркурийе Лариван умĕнђе пушшах килĕшмест.

— Ђарăн, теççĕ сана, Хĕветле! Калăп тивни сахал пулђим тата? терĕ те Кĕркури, арăмне хайар куççемпе шăтарса пăхса илђĕ. Вăл пăхнинђен такам та хăраса каймалла.

Лариван, Кĕркурипе пĕр çулталласкер, вăтăр пиллĕкрен иртсе хĕрĕхелле çывхараť. Хура сăкманлă, ђейе куçлă, йакарах тумланма йуратаť, алла кĕрекен тĕрлĕрен таварпа услам тăваť, йалта пит турра кĕл тăвакан çын пек çӳрет, кашни урам тăваткалĕнђех, кашни çын патĕнђех „комунсене" çиме йуратаť. Кĕркури ун пек мар, сутă та тумасť, ђух вăтам хресђен, анђах, темшĕн, хуť те хăçан та Лариван хыççăнрах кайма пăхаť. Ерне, Лариван йышшисемех йалта нумай мар, анђах хӳри çинђе ларса пыраканĕсем сахалах мар. Çавăнпа та Лариван йышĕ йалта ђылай вăйлăн курăнса тăраť. Кил-

те, ăшă пÿртре Лариван майлă шухăшламаннисем те, урама тухсан, темскерле хура вăйран хăранă пекех, Лариван йышĕнђен, Лариван йађĕнђен хăрама пуçлаççĕ. Килте хăраман паттăрсем те вара, урама тухсан, сивĕ ђирпе аптăрама тытăнаççĕ. Лариван йышĕнђе тĕрлĕрен çынах пур: йалти пупĕ те, тийеђукĕ те, вăтамми те, ђуххи те, карма çăварĕ те, тата ытти те.

Кĕркури патĕнђе те Лариван хăй йурринех йурла пуçларĕ.

— Ађасене ђармасан, мĕн майĕ пур вара? тет вăл.—Тем те калаççĕ вĕсем. Турă çук, теççĕ. Етем таçтан, хăйаматран, упăтерен пулнă, теççĕ. Çăлтăрсем те, хĕвелĕ те хăйсем тĕллĕнех, турăсăрах пулнă, теççĕ... Нимскер вăтанасси, хăрасси-тăвасси те çук вĕсен. Вĕсене итленипе çÿç-пуç вирелле тăрса кайат̆. Мĕн майĕ пур вара?.. Пĕтĕм йал лару-тăруне пăсасшăн, ваттисене итлемеççĕ...

Кĕркури, ытти хăт̆т̆и тарам пулсан та, çав „йал лару-тăруне пăсасшăн, ваттисене итлемеççĕ“ тенипе пушшах килĕшнĕ пек пулат̆. Куçука та вăл, пуринђен ытла, çавăншăнах курайманст̆.

— Çавна калатăп çав епĕ. Пĕтĕмпех пăсăлса кайаççĕ. Тăван ашшĕсене те ним итлеми пулаççĕ, тет Кĕркури Ларивана хирĕç.

Хĕветле вăл сăмахсене çĕр хут та илтнĕ. Хăшне, тĕнђе çинђен каланисене, хăлха виттĕрех кăларса йарат̆. Ун çинђен вăл Куçукран та, кĕнекесем вуланă ђух, нумай илтнĕ, анђах нихăшин сăмаххи те

ăша кĕрсе йулмасť. „Ашшĕне хирĕç пыраť“ тенине те питех хăлхана ђикмест.

— Хирĕç пырса нимех те туман-ха, тет. „Комун“ тесе те вăл Куçука йалти çынсем хыççăн кайнипе анђах тăрăхлаť...

— Вăл, турă çук, текен ађасене çын вырăнне хумалла мар, тет Лариван,—çĕрсе выртакан тислĕк вырăнне те хумалла мар,—тислĕкрен тырă лайăх пулаť... Çук, вăл ађасене çĕртри тусан вырăнне анђах хумалла...

Апла калани Куçук амăшĕн ђĕрине ытла ыраттарса йађĕ. Ларивана тавăрас тенĕ пекех, вăл та вара çапла сыпăçтарса хуђĕ:

— Есĕ ĕнтĕ, Лариван пиђђе, суту-илӳ те тăватăн, укçа пухатăн. Çапах та райа кайăн-ши? тесе ыйтрĕ Ларивантан.

Лариван хăйне тĕртсе каланине сисрĕ. Çапах та, ним вăтанса тăмасăрах, Хĕветлене хирĕç çавăнтах çапла тавăрса каларĕ:

— Епĕ райне кĕрепех ĕнтĕ, терĕ.—Темле кĕме май килмесен те, рай карти тулашĕнђе те пулин тăрăп тăрăпах. Рай карти тулашне ӳкнĕ йăвăç çимĕçсем пурте манăн пулĕç, çисе йарайманнине—сутăп...

— Апла пулсан, çапах есĕ райнех кĕриместĕн еппин, çапах пĕр сылăхĕ йулатех, терĕ татах Куçук амăшĕ.

— Лариван райа лекет-и, лекмест-и, сан ĕç çук унта. Анђах Куçука ђарасах пулаť.

Кĕркури апла калани Ларивана çĕнĕрен хăпартса йарат̆.

— Халăх çине илсе тухса хĕнемелле, вара хăйсемех ђарăнаççĕ... Пухăнса ларакан пӳртне халăхпа туртса илмелле, йе, ытах памасан, ишсе салатса йамалла, тет Лариван.

Халăхпа хĕнесси Кĕркурийе питех кăмăла каймарĕ, анђах пӳртне салатас шухăшпа килĕшсех те карĕ.

— Хамăра хупасран хăрамалла тата! терĕ вăл Ларивана.

— Мĕн хăрамалли пур? Хамăр майлă йĕкĕтсем сахал-им вара?.. Ђим-ха, Кĕркури. Кĕçĕр Кириле салтак матки патĕнђе йĕкĕтсем пуçтарăнаççĕ пулмалла. Кайса хĕтĕртем-ха епĕ вĕсене, текелесе Лариван пӳртрен йăпăшт тухса шурĕ.

Хĕветле тĕлĕнсе кăна йулђĕ. Анђах пӳртре Куçук çуккине аса илђĕ те, çавăнтах темрен хăраса илнĕ пек пулђĕ.

— Пирĕн Куçук леш „комунсен“ пӳртне кайнă пулас. Лариван йĕкĕђĕсенђен лекмесен йурĕ, терĕ вăл упăшкине.

— Лекин!.. Лектĕр вара!

— Кайса ђĕнес... Хамăр ађах вĕт!..

Кĕркури урай хăмине тăрăс тапрĕ те, Хĕветлене тăр-р ђĕтретсе, хăратса йађĕ.

— Молђат̆!.. Выçă ларин—лартăр ыранђђен!..ђĕнес тĕлĕшпе ура йарса ан пус, таçта хуна та хăваласа кăларса йарăп...

## IV.

„Комунсем“ пуҫтарӑнакан пӳрт. Хуҫи выҫлӑх ҫул арӑмӗпе Ҫӗпӗре пӑрахса кайнӑ. Кайнӑранпа ним сасси-хури ҫук.

— Ђирлесе вилнӗ, теҫҫӗ йалти ҫынсем. Пӳрђӗ ҫӗнӗ пекех: пӗр ик-виҫ ҫул анђах туса лартни те. Ӑшӗ ытла пӗђӗккӗ мар, пысӑках та мар. „Комунсем“ пуҫтарӑнма пуҫланӑранпа пӗтӗмпех улшӑннӑ: ӗлӗкхипе танаштарсан, палламалла та мар. Ҫтенисем ҫине пур ҫӗре те карттинсем, плаккатсем, шур сухаллӑ Карл Маркспа пысӑк пуҫлӑ Ленин, Ҫиновйӗв, Тротски сӑнӗсене ҫапса тултарнӑ. Мађђа хӑми ҫинелле пӑхсан та, куҫа Совет тӗп саккунӗпе (конститутсийӗпе) каллех тӗрлӗрен пысӑк, сарлака плаккатсем курӑнах кайаҫҫӗ. Тӗпелте пӗр кӗтессине кӑмакапа шай туса хӑмапа пӳлнӗ. Ҫав пӳлӗкӗн ку йенђе каллах хӑмаранах шкап пекки тунӑ та, тӗрлӗрен пысӑк-пӗђӗк кӗнекесем майлаштарса пӗтернӗ. Унтах тата хаҫатсем купаланса выртаҫҫӗ...

Пирӗн Куҫук кӗҫӗр ҫав пӳртре сӗтел хушшинђе лара парать. Сӗтелли ҫинђе, тӑвар килли ӑшӗнђе, пӗђӗк шуҫ лампӑ шӑши куҫӗ пек ҫутатса тӑрать. Хӑйу ҫунса пынӑ майӗн ҫунӑк шӑрши те пӳрте лӑках сарӑлса тулать.

Ӑшне ҫунӑк шӑрши ларнине Куҫук ним те туймасть. Ленин ҫинђен ҫырнӑ пӗр пӗђӗк кӗнеке тытнӑ та, вуласа ларать.

Пӳртре шӑп...

Пĕр шăрђăкĕ çеç кас-кас кăмака айĕнђе хăйĕн касхи йуррине шăрантарать. Тата сĕтел çинђе кĕнеке листисем усăлкаласа илнипе пўртри шăплăх кăшт пăсăлнă пек пулать. Ытла шăп пулнăран тата Куçука пўртре ларма темле киђемле пек... салхуллă.

— Пĕри те пулсан килмест-ши? тесе вăл ђўређерен те пăхкаласа илет...

Вăхăђĕ иртерех-ха, хăйă та хаљ анђах çутнă. Çавăнпа йулташсене пăртак кĕтмелле.

Куçук кĕтет. Кĕнекине вулать... Татах кĕтет...

Акă çенĕхре шашăлкка сасси илтĕнђĕ.

— Путех Иван килет пулас!

Пĕлнĕ пекех, алăкран Куçук йулташĕ Иван кĕре парать.

— Ма пит ир килтĕн, Куçук?

— Ђиттаљнă пуçĕн ир килмелле ĕнтĕ.

— Çук, уншăн мар-ха есĕ... Пайан ытла ир килнĕ.

— Ан та шарла... Калăп кукли çитерсе йађĕç.

— Сана та-и?

— Мана та çав. Сана та-им апла?

Иван пĕђĕккĕ те, лутра, сарă ађа, кулкалать анђах.

— Аран тухса тартăм, Куçук! Атте турăш кĕтессине ђăркуçлантарса лартрĕ те: „Сăхсăх, пуç-çап, ђорт ађи", тет. Пуççапмасан калăппа йарап! тет. Епĕ хăрарăм. Ирĕксĕрех хĕрес хывса илмелле пулђĕ...

Иванпа Куçук иккĕшĕ те:

— Хех-хеҳ-хех!.. Лăк-лăк-лăк!.. Ха-ха-ха-х!—тесе кулса йађĕç.

— Мĕнле пĕтерес ку тĕттĕм сухалсене? терĕ те Иванĕ, Куçук ăна хирĕç тавăрса та калаймарĕ,—сасартăк урамра ађасем çĕмĕрĕлсе, кăшкăрашса пыни илтĕнех карĕ.

Епĕр кам-м? Епĕр кам-м?—
Сысна пасар панђисем! Панђисем!
Пире хирĕç кайакан-н, кайакан-н
Пылђăк пулĕ таптама! Таптама!
Епĕр кам-м! Епĕр кам-м?
Сысна пасар панђисем! Панђисем!..

Куçукпа Иван ђӳређерен пăхрĕç. Урам хушшипе пĕр ушкăн çамрăк йĕкĕт хăй тĕллĕн тискерленсе, урасемпе тапăртатса, урнă пек пырать.

Вĕсене курсанах, Куçукпа Иван, хăйсем те сисмерĕç, темрен хăраса илнĕ пекех пулђĕç...

Урамра пĕри ђиттаљнă çинелле пăхрĕ те:

— Комун-н-н!.. Ђо-о-р-т!.. У-х-х!—тесе пыршипакарти тухиђђенех çухăрса илђĕ.

Куçук ăна сассинђенех палларĕ. Çухăракан Лариван ывăлĕ Микула пулђĕ. Урамри ушкăнне йертсе пыраканĕ те вăлах мĕн.

Кăшкăрашса, çĕтĕлсе илнĕ хыççăн урамри ушкăн таçта тăвалла ухса куçран çĕтен пек пулђĕ.

„Комунсеи“ пӳрђĕ патнелле пырасси-тăвасси пулмарĕ. Куçукпа Иван та çăмăллăн сывласа илђĕç.

— Пĕлес çук вĕсене. Тен, кунта та кĕретђĕç?.. Пĕтĕмпех çавăн йышшисем пухăннă, терĕ те Иван, иккĕшĕ те хаçат-кĕнекесем вулама ларђĕç.

Пўртре каллах шăп пулђĕ.

Каллах шăрђăк йуррипе кĕнеке-хаçатсем кăштăртатни анђах шăплăха пăсма тытăнђĕ.

Анђах вăл та нумайа пымарĕ...

Урамран сасартăк пўрт йеннелле патаксемпе те, ђулсемпе вăркăнтара пуçларĕç.

— Вăн-н-н! Вăн-н-н!—тенĕ сасăсем пĕтĕм пўрт çтенисем çумне пыра-пыра çапăнма тытăнђĕç.

Унђђен те пулмарĕ:—Ђăнкăр-р-р! Ђанкăр-р! терĕ те, пĕр кантăкăн ђи пысăк куçех шăпăр-р-р саланса карĕ.

Куçук çавăнтах ламппине лап сўнтерсе лартрĕ. Алăкне шал йенђен питĕрђĕ те, Иванпа иккĕшĕ хăвăртрах тĕпсакайне анса тăђĕç. Хăйсем, хăранипе, пĕтĕмпех ђĕтрене йернĕ. Куçукĕ çапах:

— Кĕнекисене пĕтерес марђђĕ, çавсене хĕрхенетĕп, тет.

Иван ним те ђĕнмест: тăпрас çинђе хытса кайнă пекех ларать.

Пўрт çтенисене çаплах кĕрĕслеттереççĕ... Мăшкăлана пек, тип шаписем те тĕпсакайĕнђе:

— Лăрк-лăрк-о-р-р-лăрк! тесе Куçукпа Иванран кула-кула илеççĕ...

## Ѵ.

Тепĕр кунне ирех ђиттаљнăра комсомолсен пуху пулђĕ. Пухăва, ђăнах та, Куçук амăшĕ калашле,

пĕр çирĕм ађана йахăнах пухăннă. Пухăннă çамрăксем пурте пуçĕсене тӳрĕ тытаççĕ, маттур пăхаççĕ, маттур калаçаççĕ.

— Ну, Куçук! Иван! Хăрамарăр-и касхине? тет пĕр сасĕ.

Куçукпа Иван та йулташсем хушшинђе хăпартланса анђах çӳреççĕ. Куçукĕ ĕнертенпе ăша çăкăр йаман, çапах хырăм çинђен ним те шухăшламасť, ун çинђен маннă пекех çӳрет. Çав тĕрлĕ кулса, çутăлса, теме малашнехине ĕмĕтленсе тăракан маттур йулташĕсем çинелле пăха-пăха илет те, Куçук тата çунатланса кайаť...

— Ну, уçар пулĕ пухăва! Пурте пухăнса çитнĕ пулас, тет Михаља сасси.

Михаља вулăсра иккĕмĕш сыпăк шкулта вĕренет, йађђейккă çекреттарĕ. Ăна хирĕç çамрăксем пурте пĕр харăс:

— Уçар! Уçар! терĕç.

— Уçăлас умĕн интернатсионал йурламалла, тет Куçук.

Ыттисем:

— Йурлар!.. Йурлар! терĕç.

Пуçларĕç йурлама...

Паттăр та, турă та, патша та,
Пире никам та çăлас çук.
Çăлăнăçа епĕр тупăпăр
Хамăрăн çамрăк алăпа...

Куçука, пуринђен ытла, çав сыпăк ăша çыпăçаť, ăна вăл ытти сыпăксенђен те хăватлăн туйăнаť.

Йурласа ђарӑнсан та, Куҫук каллах ҫавнах аса илет. Ҫавнах вӑл ӑшӗнђе тепӗр хут йурласа йарать.

Паттӑр та, турӑ та, патша та...

— Пайан кун йӗркинђе ҫакӑн пек ӗҫсем пур, тет ҫивӗђ, уҫӑ сасӑллӑ ҫекреттар.—Пӗрремӗш—ђиттаљнӑ кантӑкӗсене ҫӗмӗрекенсене сута прасси, иккӗмӗш—ҫитес вырсарни кун шкулта ҫпектаккӑљ лартасси, виҫҫӗмӗш—политкрамӑттӑна вӗренмелли крушок уҫасси, тӑваттӑмӗш—вак-тӗвексем. Кун йӗркине йышӑнатпӑр-и?

— Йышӑнатпӑр-р!

— Йурӗ еппин. Ӗҫлеме пуҫлӑпӑр.

Ҫекреттар каласа пӗтернӗ-пӗтерменех, алӑкран Иван амӑшӗ, те пит ђупса килнӗрен, хашкаса кӗре парать. Аллине пӗр вӑрӑм алтуйи тытнӑ. Кӗнӗ-кӗмен тӳрех тӗпелте ларакан Иванӗ патне иртме тӑрать.

— Ах, тур-тур-р! Мӗн курас санпа? Пӗтӗм йал кулать вӗт ӗнтӗ!.. Ӑҫта пыр унтах: сан ывӑл ҫапла мар-и, капла мар-и? теҫҫӗ. „Комун“ парттинђе тӑрать мар-и? теҫҫӗ. Урама тухма та ҫук—пурте сиввӗн пӑха пуҫларӗҫ. Темскер вӑр тунинђен те усал ӗҫ тунӑ пек пӑхаҫҫӗ... Аҫа, Иван, киле! Тархасшӑн текех ҫын умӗнђе намӑс ан кӑтарт... Аҫа!.. Аҫа! тетӗп.

Карђӑка Иван патне йамарӗҫ. Ҫекреттар уҫӑ та хытӑрах сасӑпа витермеллех ҫыпӑҫтарса лартрӗ:

— Патакпа ҫӳреме кунта сурӑх кӗтӗвӗ мар. Пуху хупӑнмасӑр Ивана йамастпӑр, пуху хупӑнсан хӑйех пырать. Итлеме ӳркенместӗн пулсан, есӗ те ларса итле! терӗ.

Иван амăшĕн ирĕксĕрех ђĕлхине çыртмалла пулђĕ. Çав тĕрлĕ нумай ађасене курсан, унăн пĕтĕм куç-пуç саланса карĕ.

— Ак тамаша... Ак тамаша... Итлесе пăхам-ха еппин, тесе хăй ăссĕн мăкăртаткаларĕ те, алăк патĕнђи кунťăк сакки çине ларђĕ.

Таçтан тĕлнех пулаť тата, вăл ларнă ларманах, алăкран Куçук ашшĕ те вĕркĕнтерсе кĕрет.

— Аťа киле! Мĕн выçă çўрен? Аťа, сысна!

Куçук тăрук хăйулланса çитрĕ те, пурин умĕнђех ашшĕне çапла каларĕ:

— Ывăлу санăн вĕренме, çын пулма тăрăшаť. Есĕ ана калăпсемпе хĕнетĕн, выçă ларťаťăн, хăваласа йар мана пĕрех хут килтен! Пайанах хулана тухса кайатăп, хуť те мĕнпе тăранса пурăнам вара! терĕ хуђĕ.

Ашшĕ хăраса карĕ: çав тери нумай маттур ађасем умĕнђе ăна хăйнех лайăх мар туйăнђĕ. Иван амăшĕн те куçĕсем пушшах ђарăлса илђĕç.

— Ну, Кĕркўри пиђђе! Есĕ те пирĕнпе пĕрле итлесе лар. Епĕр усал ĕç тумастпăр, терĕ те çекреттар, пуху ĕçлеме тытăнђĕ.

Куçук ашшĕ:

— Ну!.. ну! текелесе Иван амăшĕ çумне кайса ларђĕ. Иккĕшĕ те лайăхрах итлеме хăлхисене тăратрĕç.

Пўртре тăпах пулђĕ. Çекреттар сасси анђах, темшĕн, ĕлĕкхи кунсенхинђен пĕрре кĕретех çивĕђђĕн, тепре хайаррăн, çиллĕн тухса пыраť. Ăна

çамрăксем пурте сисеççĕ. Çекреттар сасси мĕншĕн апла тухнине те пĕлнĕ пек пулса шарламасăр лараççĕ.

— Сапла çĕр каç çпеккуђант Лариван ывăлĕçем ђиттаљнă кантăкне ватса кайнă...

Çамрăксем пурте çĕмрĕк кантăк куçне пăхса илеççĕ.

— Вĕсен кампанинђе, паçăр шутласа кăларнă тăрăх, вунă ађа пулнă: Ларивансăн иккĕшĕ, тийеђук ывăлĕ те. Вĕсем йури, пĕлсех апла хăтланнă... Вĕсене епĕр пурне те сута паратпăр пулĕ?

— Паратпăр! Паратпăр!

„Сут“ тенĕрен Куçук ашшĕ кăшт хăранă пек пулаŭ, хăйне хăй темшĕн, айăплă пек шутласа илет.

Çекреттар çаплах сассипе витерет.

— Çитес вырсарни кун шкулта çпектаккăљ лартмалла. Пйесси—„Йалта“. Йураŭ-и?

— Йураŭ!.. Йураŭ!

— Репетитсире кăтартса пымашкăн кама суйлатпăр?..

— Сана!.. Сана!

— Мана йăвăр пулаŭ. Манăн çу уйăхĕн 1-мĕш кунĕ çинђен калама хатĕрленес пулаŭ. Урăххине суйлăр!

— Михаљапа Куçука!.. Михаљапа Куçука!..

Кĕркурипе Иван амăшĕ шалт тĕлĕнсе лараççĕ. Тўсеймесĕр, пĕр-пĕринпе хуллен темскер пăшăлтата пăшăлтата илеççĕ.

— Епӗр политтӗккӑ тӗлӗшӗнҗен, патшалӑхсем, патшасем йепле пулса кайса вӗсем йепле пӗтессине пӗлес тӗлӗшрен пит кайа йулнӑ, тет çекреттар. — Пирӗн çавна вӗренмешкӗн крушок уçмалла. Лектӑр районран килме пулҗӗ. Пӗр крушок пуçлӑхне çеç суйламалла. Кама суйлатпӑр?

— Михаљана!.. Мируна!.. Павӑла!

— Виçӗ кӑнтитат. Халӗ ӗнтӗ çавсенҗен алӑсем тӑратса суйлӑпӑр.

Алӑсем тӑратаççӗ... Суйлаççӗ... Михаљапа Павӑл суйланаççӗ.

Вак-тӗвек ӗçсенҗен нимех те тупӑнмарӗ. Çӗнӗрен сойуса пӗр-ик аҗа җлена илҗӗç... Калаçсан, калаçсан, маттурсем куллине те кулса илҗӗç

— Ну, йулташсем, пухӑва хупатӑп ӗнтӗ.

Каллах интернатсионал йурри йанӑрса карӗ. Аҗасем пурте ура çине тӑнине кура, Кӗркурипе Иван амӑшӗ те ура çине тӑҗӗç... Çамрӑксен йурри ватӑ җӗресене те хускатса йаҗӗ. Пуринҗен ытла çак çтихсем аван çыпӑçрӗç:

Çӑлӑнӑça епир тупӑпӑр
Хамӑрӑн çамрӑк алӑпа...

. . . . . . . . . . . .

Ку пирӗн йулашки
Татӑклӑ çапӑçу!
Интернатсионалпа
Етем йӑхӗ җӗрӗлӗ...

. . . . . . . . . . .

Епир пикенсе тытăнсассăн,
Хуйхăпа асап ађисем,
Çĕнĕ тĕнђе тума пĕлĕпĕр—
Вырăна кĕђђĕр ĕмĕтсем.

Ку пирĕн йулашки, т. ыт. те.

Йурласа пĕтерсен, çамрăксенђен хăшĕ киле тухса карĕç, хăшĕ унтах йулђĕç.

Куçук ашшĕпе Иван амăшĕ тухса кайман-ха. Вĕсем тата темскер пуласса кĕтеççĕ, вĕсене татах темскер çитмест пек... Йулашкинђен, иккĕшĕ те пӳрте йулнă ађасенђен çапла ыйтрĕç:

— Пĕтри вара?

— Пĕтрĕ-çке, пĕтрĕ, тет сĕтел хушшине çырма кĕрсе ларнă çекреттар.

— Куншăн пулсан хăрамалли те çук еппин, тет тата Иван амăшĕ.—Епĕ темскер комуна, пĕрле пурăнмалли çĕре çыртараççĕ, тесе.

— Çук, никама та ирĕксĕр çырмаççĕ. Комун вăл ирĕклĕ йапала. Тата ăна тума хатĕрленес пулаť... вĕренес пулаť. Епир вĕренетпĕр кăна.

— Е-е-е-е, апла еппин...

— Петĕр Ларивнĕ каласа хăратнăран, епĕ темскер килсе вĕлермелли усал ĕç тăваççĕ, тесе, тет Кĕркури те.—Куншăнах кам вĕлертĕр вара?!.. Ех, ухмахсем мар-и епир!

— Хамăра кирлĕ ĕç тăватпăр епир—çын пулас, тетпĕр. Ĕлĕкхи тĕттĕмрен тухас, тетпĕр. Урăх нимле усал ĕç те тумастпăр, тет татах çекреттар.

Куçукпа Иван, пĕрин ашыĕ, теприн амăшĕ улшăннине курсан, хавасланнипе хаçатсем тытнă та, пиђĕсене хаçатпа хуплаштарса тек вăрттăн кула-кула илеççĕ.

— Куншăн пулсан ним те ђармалли çук... Хамăрăн та кайас килмест кунтан... Вулама пĕлместпĕр. Епир те вуласа пăхăттăмăрђђĕ... çўрĕрех еппин хăвăр пĕлнĕ пек. Анђах ашкăнса, усал ĕç туса ан çўрĕр. Çав лайăх мар, текелесе ватăсем иккĕшĕ те пўртрен тин тухса карĕç...

Çĕмрĕк кантăк виттĕр ирхи хĕвел çутти кĕђĕ... Пўртри ађасем татах хавасланса карĕç.

Куçук ăшĕнђе:

— Пирĕн вăй!.. вăй!.. тесе урай тăрăх аллинђи хаçатпа уткаласа çўрет.

# Паљља.

Паљља пурнăçĕнђен нисе çырнă пĕђĕк калав. Унăн ашшĕпе пиђђĕшне патша вăрçинђе пимĕçе хирĕç пăшал пеменшĕн персе вĕлернĕ.

I.

Ирхи хĕвел Паљљасен лупас тăррине йерипен йăпшăнса çитрĕ те, Паљља сывăракан кĕлет умне çап-çутă çутатса йађĕ. Паљља вара, те хĕвел ытла пĕçертсе илнĕрен темĕскер, хăй çинђи шăналăкне пуç çинђенех витĕнтерсе хуђĕ. Хăй татах ăйха хăрлаттарђĕ.

Кĕтўсем хусан, хĕвел ђылай çўле хăпарсан тин, Паљљана вăратма амăшĕ пыђĕ.

— Тăрах, Паљља! Хĕвел тахçанах тухнă, сывăрса ан йул тата, терĕ вăл.

Амăшĕ мĕн çинђен каланине Паљља ђасах тавçăрса илђĕ. Пайан вĕсен ут кĕтў кĕтме ђерет тивнĕ. Кун çинђен амăшĕ Паљљана касхинех, вырăн çине сывăрма выртађђенех систерсе хунă. Çапах та, те хĕвел ăшши шăналăк ăшнех кĕрсе пĕçертнĕрен, Паљља çав тери тутлă, йăвăр ăйхине аран аран парăнтарђĕ.

— Айук, анне... каймастăп епĕ пайан... Çывăрас килет манăн, терĕ вăл ăйхă тĕлĕшпе.

Кăвар пек хĕп-хĕрлĕ хĕвел, лупас тăрĕнђен çӳлтен çӳле хăпарнă çемĕн, хытăран хытă хĕртме пуçлаť. Хĕвел хĕртнине Паљђа ђăтаймарĕ.

Çитменнине ăна хĕвелпе, пĕрле шăнисем те тек пыра пыра йĕкĕлтеççĕ. Паљђа вĕсене хăй хускалса илнипе те хăратаť, шăналăк вĕçĕпе те хӳтерет, аллисемпе те çапкаласа илет. Шăнисем çапах итлемеççĕ: ăçтан та пулин вĕсем Паљђана çыртаççĕ çыртаççех. Шăнасем çине хыт çиленнипе Паљђа, шăнана çапас тесе, сылтăм ывăç тупанĕпе кĕлет пĕренинне çат! тутарђĕ те, алли пит ыратса кайнăран пулас, ђут макăрса йарађђĕ. Тинех вара вырăн çине тăрса ларђĕ.

Паљђа кăмăлсăр ларнине курса амăшĕ ăна:

— Ма ђасрах тăмарăн? çын айăплă мар, ху айăплă, ађам, терĕ.

Хĕвелĕ те, Паљђа кăмăлсăр ларнине курсан, çапла каланă пек пулђĕ:

— Ӳлĕмрен, Паљђа, нумай ан çывăр. Нумай çывăракана епĕ тата хытă пĕçертетĕп... Шăнасене çырттаратăп... Кус, ђасрах вырăн çинђен кай та, питне сивĕ шывпа çу, тенĕ пек туйăнђĕ.

Паљђа питне çурĕ те, тӳрех сĕтел хушшине кĕрсе ларђĕ. Амăшĕ ун умне ђашкăпа хаљ анђах сунă сĕт пырса лартрĕ те, çапла каларĕ:

— Кĕтӳре Микулай куккунтан уйрăлса ан çӳре, кам та кам тивет, тӳрех ăна кала, терĕ.

Паљђа сётне хыпалансах çийет. Амăшĕ ун валли пĕђĕк шурă хутаçа хăпартлу, пўремеç, ђăкăт, тата çăмарта ђикет.

— Хутаçне çĕр çинђе йăвалантарса ан çўре вара, тет.

— Йурат, тет Паљђа.

Сётне сыпса йарсанах, Паљђа хутаçне хулпуççи çинђен çакрĕ, сăхманне хулпуççи урлă йађĕ, вăрăм ђăпăрккине пĕр çĕре пуçтарса сылтăм аллине тытрĕ.

Амăшĕ ăна пĕђĕк хапхаранах ăсатса йађĕ. Паљђа уй çулĕпе йепле кайнине вăл нумайђђен пăхса тăђĕ. Паљђа курăнми пулсан тин, хапха шашăлккине лартрĕ те, пўрт умнелле уттарђĕ. Пўрт умне çитсе тăнă тăманах, амăшĕн куçĕнђен куççулĕ шăпăртатса анђĕ. Хăй ђутах çĕрелле ђăсăлса выртађђĕ. Пўртум сакки çине ларђĕ те, Паљђа амăшĕ ĕсĕклесех йĕре пуçларĕ.

— Хăçан Паљђа пысăкланĕ-ши? Вара çапах пурнăттăмăрђђĕ... Ех, турă, мĕншĕн есĕ ман тĕлтен çухалтăн-ши?.. тесе йĕрет Паљђа амăшĕ.

Ђăнах та, пурнан ĕмĕрте унăн пысăк хуйхă курмалла пулђĕ. Йуратнă упăшкипе аслă ывăлне патша вăрçинђе вĕлерђĕç. Халĕ Паљђапа иккĕшех пурăнаççĕ. Паљђа пит çамрăк, 9 çулта анђах. Пĕтĕм килти ĕç ăмăшĕ çине тийенђĕ. Çавăнпа та унăн йĕмен кун иртмест. Пĕтĕм шанђăкĕ те Паљђа амăшĕн Паљђа ўссе çитессинђе анђах.

II.

Ут кĕтӳ Пылак çырминђе тăрат̆. Пылак çырмине каљђа пуссипе каймалла. Пирĕн Паљља пĕђђенех çулпа утса пырат̆. Утнă май вăл симĕс каљђасем çине пăхса савăнат̆. Тăрисем йепле сывлăш тăрăх йарăнса пынине курат̆, вĕсем йепле уççăн йурланине тăрсах итлет. Тăрисем йурланă ђух Паљљан хăйĕн те йурласси килет. Паљљапа пĕрлех хĕвел çутти те каљђа çинђе çутăлса пырат̆. Хĕвел çутти çутăлса пыни Паљљана тĕлĕнтерсех йарат̆.

— Мĕн-ши ку? тет вăл хăй ăшĕнђе.

Аптăранă йенне, йăлкăшакан çутă вырăнне Паљља тăпра măклашкипе персе пăхат̆. Пенинђен ним те пулмаст̆: çутă çаплах Паљља çулĕ айăккипе йăлкăшса пырат̆...

Çул çинђе Паљља кĕтӳрен ут тытса килекенсене тĕл пулат̆. Çынсене утсем халĕ йе тислĕк тăкма кирлĕ, йе вăрмана кайма, йе тата пĕр пĕр çĕре кайса килме кирлĕ. Йуланутлă çынсем Паљљана тĕл пулаççĕ те, вăл ут кĕтӳ пăхма кайнине пĕлсех, йури унтан çапла ыйтаççĕ:

— Ăçта кайан, Паљља? теççĕ.

Паљља пысăк çынсенђен йутшăнса мĕн тăмаст̆. Вăл тӳрех, пысăк çынсем калаçнă пек, сассине пысăклатат̆ те, кашни ыйтан çыннах:

— Ут кĕтӳ пăхма кайатăп, тет.

Çынсем Паљљана ђăр-ђар пăхса ирте-ирте кайаççĕ.

— Ытла çамрăк-çке вăл! çапах пысăк çын пекех таклаттарса пырать...

Урисенђе шурă пир-тăла, çĕнĕ çăпата, йĕмне кăвакартса тунă пиртен çĕлесе панă, кĕпине шурă пиртен пит илемлĕ тĕрлесе панă, пусĕнђе çĕнĕ карттус. Амăшĕ пĕртен пĕр Паљђине хыт йуратать курăнать.

— Ылтăн пĕђĕккĕ те, хакĕ хаклă. Ашшĕпе пиђђĕшĕ вырăннех ўсет ĕнтĕ вăл.

Тĕл пулан çынсем ђасах йал патнелле иртсе çухалђĕç. Пирĕн Паљђа çаплах хĕвел çуттипе выљђаса пырать. Пылак çырмине çитесси унăн нумай та йулмарĕ.

Пылак çырми вăл вăрман ăшнех кĕрсе кайать. Пылак çырминђе шултăра ăвăссем те, вĕтĕ ăвăссем те, тата ытти йăвăçсем те ўсеççĕ. Çав çырмана кĕређђен малтан пĕр пĕђĕк шыв урлă каçса каймалла. Паљђа акă шыв патне те çитрĕ. Уçăлмалла аллисене, питне-куçне шывпа çурĕ те, Паљђа тўрех тапăралла уттарђĕ.

— Ха-а, Паљђа килђĕ, пĕђĕк Паљђа килђĕ! терĕç тапăрти çынсем.

Кĕтў пăхакан кивĕ шăпа вырăнне çĕнĕ шăпа килсе çитсен, кивĕ шăпа пĕтĕмпех киле карĕ. Çĕнĕрен килнисем тĕрлĕ кĕтеселле саланса пĕтрĕç. Тапăрти утсене те салатса йађĕç. Паљђа вĕтлĕх çумне, йешĕл-симĕс курăк çине сăхманне сарса выртрĕ те, ђеђексем татса çуллахи çут çанталăк илемĕпе савăна пуçларĕ. Лерен, леш айăккинђен

кётӳ кётекен хёрсем йурлани Паљђа патне йанах йантраттарса çитрĕ:

Хĕвел çутти айĕнђе
Ма йурлас мар, тантăшсем?
Йешĕл курăк хушшинђе
Ма татас мар ђеђексем?
Хĕвел çутти айĕнђе
Ӳснĕ епĕр пĕђĕкрен,
Хĕвел çутти айĕнђех
Тавай йурра тапратар!..

— Ах, камсем йурлаççĕ-ши куна? терĕ те Паљђа хăй ăшĕнђе, ђеђексем шăршласа, сăхманĕ çине йарт ђăсăлса выртрĕ. Вăл ăвăс çулçисем виттĕр йепле хĕвел çутти ђĕрпĕл-ђĕрпĕлĕн ӳкнине сăнаса выртрĕ. Йепле вăрманта: кук-кук! кук-кук! тенĕ сасă вăрман ăшнелле йанах кайнине, йепле çав сасах Пылак çырмине те уççăнах илтĕннине асăрхаса выртрĕ. Йепле шăпђăкĕ ыттисенђен те пушшах илемлĕ йурланине итлесе киленђĕ. Паљђа патĕнђех, инçетре те мар, ытти кайăк кĕшĕксем те: ђилик! ђилик! теççĕ, тем тĕрлĕ те йурласа ђуна савăнтараççĕ. Паљђа курăк çинђе выртса тем тĕрлĕ шухăша та карĕ.

— Ытла та аван-çке çулла... вăрманта. Çӳлтен саң çине ытараймасăрах хĕвел пăхса тăрать,. кайăксем... Шăпђăксем... Кукkуксем... Ђеђексем... Ăвăс çулçисем те пĕр-пĕринпе калаçнă пек çăтăл-çатăл çатăлтатса илеççĕ...

Кăшт тăрсан, хăпартлупа çăмарта çикелесенех, те хĕвел ăшши пусса аптратнăран, Паљђа ђипер выртнă çĕртех сĕнк пулса карĕ. Курăк çинђи сăхманĕ çинђех вăл тутлă ăйха харлаттара пуçларĕ.

Çывăрсан нумай та тăмарĕ, Паљђа тĕлĕнмелле тĕлĕк курђĕ. Пиђђĕшне çут пакунлă йăнарал пуçне кастарса вĕлерттерет пек. Вилсен вара, вăрăм тумтирлĕ пуп кĕлтăват те, Паљђа пиђђĕшне пĕр тарăн шăтăка çаплах пăрахаççĕ. Шăтăкĕнђе татах тем ђухлĕ вилнĕ салтаксем çăварĕсене карса пăрахнă та, выртаççĕ пек. Пиђђĕшне шăтăка пăрахсан, Паљђа ашшĕне те вĕлерме илсе пыраççĕ. Паљђа ашшĕ пуçне уснă та, куљђаннипе шап-шурă шуралса кайнă. Хăйне вĕлерес умĕн ашшĕ Паљђана курах кайат. Вара ашшĕ пуçлăхран тилмĕрсе Паљђапа пĕрик сăмах курса калаçма ыйтат.

Пĕр салтак ăна Паљђа патне илсе пырат. Ашшĕ вара Паљђана çапла каласа хăварат: Йуратнă ывăлăм Паљђа, пирĕн пиђупа иксĕмĕрĕн те нимĕç çыннисене, нимĕç тăвансене пăшал пеме хăйу çитеймерĕ... çавăншăн ĕнтĕ пире вĕлереççĕ... Ху пысăклансан, есĕ пире вĕлерекенсене тавăр, епĕр вилни çинђен аннӳне пĕлтер, терĕ те, хăй ĕсĕклесех йĕрсе йађĕ... Паљђа та йĕре пуçларĕ... Йĕрсех вăл ăйхинђен вăранђĕ.

„Йăнарал“, „салтак“ «вĕлернĕ» тенине Паљђа амăшĕ каланине анђах илтсеђђĕ. Халĕ ăна çавăн пек усал, хăрушă тĕлĕк курăнђĕ. Вăрансанах, Паљђа хăй ăçтине те пĕлеймест. Пуç çавăрăна пуçларĕ

ўнăн. Пĕр хĕвел çутти ăвăс çулçи виттĕр кулса пăхни, кайăксем йурлани, тата йĕри-таврах тутлă шăршлă ђеђексем çурăлса ларни анђах Паљђана тăна кŷртрĕ.

Йапалисене пуçтарђĕ те, Паљђа сырма варнелле анђĕ. Çырмара кантăр кŷллисенђи шыв та. вăрмантан йухса, шăнкăртатса анакан шыв та тăп-тăрă. Кŷлĕсенђе пулăсем выљаса çŷрени те çаплах курăнат. Паљђа пĕр кŷлĕ хĕрне пыђĕ те, кŷлĕ çине пăхсе савăна пуçларĕ. Пулăсемпе пĕрлех кŷлĕ тĕпĕнђе хĕвелĕ те йалкăшса тăрат. Çŷлти кăвак пĕлĕт те шыв тĕпĕнђе кăн кăваккăн курăнат. Кŷлĕре хĕвел йалкăшса тăни каллех Паљђана илĕрте пуçларĕ. Акă вăл ђул катăкĕ илет те: хĕвел йалкăшни пĕтмĕ-ши? тесе, кŷлĕри шывалла лађ! тутарат. Шывĕ шампăлт! туса илет те, Паљђа сисмен çĕртенех, пĕр шапа урисене саркаласа шыв çине тухса таçта кĕрех çухалат. Кăшт тăрсан, кŷлĕри шыв каллех тăп-тăрă пулса тăрат. Каллех кŷлĕре хĕвел йалкăшакан пулат.

— Паљђа, асту, вĕтлĕхе утсем кĕреççĕ! тесе кăшкăрат пĕри анат йенђен.

Паљђа йапалисене йăпăрт йапăрт илет те, каллех паçăр ларнă тĕлелле кайат. Вăрăм ђăпăрккипе вĕтлĕхри утсене айлăмалла хŷтерсе антарат те, каллех паçăр ларнă вырăнах сăхманне сарса пăрахат. Каллех вăл кайăк кĕшĕксен йуррине итлет. Ђеђексен шăршине нăш-нăш тутарат. Ăвăс çулçи виттĕр хĕрлĕн те кăваккăн йăлкăшакан хĕвел çутти

айёнђе савӑнса ҫӳлелле пӑхса выртаҭ. Каллех ун пуҫне тӗрлӗрен илемлӗ шухӑшсем пырса кӗреҫҫӗ. Ҫав шухӑшсем вара йешӗл симӗс курӑкпа сарӑ ђеђексем тӑрӑх вӑрманалла вӗҫех кайаҫҫӗ. Акӑ Паљђа паҫӑр курнӑ тӗлӗке аса илет. Шарт сикнӗ пек пулаҭ. Анђах хӗвел ҫаплах йӑлкӑшса тӑни, таврари ҫӗр-шыв ытла та илемли Паљђанна каллех хавасլантарса йараҭ.

Ут кӗтӳ кунӗпе пӗрех Пылак ҫырминђе тӑђӗ. Курӑк-ђеђек патӗнђен кӳлӗсем патне ҫӳресех Паљђан кун иртни те сисӗнмерӗ...

## III.

Хӗвел йалӑн леш йенђи вӑрман тӗлне ђаранна та, пӗтӗм ҫуртри пуссине ҫап ҫутӑ ҫутатса тӑраҭ. Паљђа сӑхманне хул айне хӗстерсе, пушӑ хутаҫҫипе вӑрӑм ђӑпӑрккине пӗр ҫере ҫыхса хӑрах аллипе тытнӑ та, ирхине кайнӑ ҫулпах йалалла таврӑнаҭ. Сывлӑшра тӑри пӗрре ҫӳлелле йарӑнса ухаҭ, тепре ҫӗрелле анаҭ. Паљђана тӑрса итлеме ђӗннӗ пекех, тӑри ҫапла каласа йурлаҭ:

— Три-три! Тӑр-тӑр-тӑр-р-р! Трр-три! тет.

Паљђа, ђӑнах та, тӑри йурланине тӑрсах итлет. Тӑрипе пӗрле путени те инҫетрен:

— Пӑҭ-пӑљ-ҭӑк! Пӑҭ-пӑљ-ҭӑк! тесе илет.

— Пурте лайӑх-ҫке! Пурте илемлӗ-ҫке!

Акӑ Паљђа йӗтем хыҫне ҫитрӗ. Кунӗпе ҫӳресе ывӑннӑскер, килне вӑл йерипен утса карӗ. Пӗђӗк хапхаран кӗнӗ кӗменех, ӑна амӑшӗ тухса илђӗ.

— Урусене салтса пăрах та, пўрте сĕт çиме кĕр, терĕ; хăй Паљља валли кĕлет умне вырăн сара пуçларĕ.

Хĕвел анса ларайман-ха. Хапха çумĕнђи хўме çурăкĕ виттĕр унăн çутти Паљља вырăнĕ çине ўкнĕ.

Паљља ђасах пўртрен тухрĕ те, турех вырăнĕ çине кĕрсе выртрĕ. Хĕвел çутти шăп унăн пуçĕ çине пулђĕ. Вара Паљља пылак çырминђе курнă тĕлĕкне аса илсе каллах шăрт-шарт сикнĕ пек пулса карĕ. Тĕлĕкре курнă ашшĕн йулашки сăмахĕсене те аса илђĕ.

— Ху пысăклансан... пире вĕлерекенсене... тавăр!..

Çав вăхăтрах Паљља çинђи хĕвел çутти кĕлет пĕренисем çинелле хăпарса карĕ те, Паљља каланипе килĕшсе:

— Пысăклан-ха, Паљља, вара аçусене вĕлерекенсене тавăрăн, тесе калана пекех çутăлса илђĕ. Вара Паљља та шарт сикме пăрахрĕ. Шăналăкĕпе витĕнсе, хĕвел çуттине курмалăх шăтăк турĕ те, куçĕсем унăн йерипенех хупăна пуçларĕç. Хĕвел çутти те йулашкинђен Паљљана:

— Асту, Паљља, нумай ан çывăр... ирхине епĕ сана каллех пĕçертме пуçлатăп, шăнасене çырттаратăп, тенă пек пулђĕ...

## IV.

Пылак çырминђе хăрушă тĕлĕк курнăранпа шăп пилĕк çук иртрĕ. Унтанпа Паљља та ђылай ўссе çитĕнђĕ. Самани те нумай улшăнђĕ. Паљља хăйсен јалĕнђи шкулта хут вĕренет. Пĕрре вĕсен шкулне

хуларан хăйсем пек çамрăк йĕкĕт пыђĕ те, пĕтĕм шкул ађисене коритора пухрĕ. Кориторăн пĕр кĕтессинђе пысăк хĕрлĕ йалав тăратнă, çтенасем çине тĕрлĕрен хутсем çапса пĕтернĕ. Йалавĕ çине: Ĕçхалăхне ђуралăхра тытакан патша йĕркине тымарĕпех пĕтерĕр! тесе çырнă. Ытти хутсем çине те: Текех епĕр ђурасем мар, тата: Çамрăксем ушкăнĕсем уçăр та, çĕнĕ пурнăç тума вĕренĕр! тесе çырнă. Щкул ађисем пурте пуçтарăнса çитсен, хуларан килнĕскерĕ, кăнтăр йенђи ђўређерен йăвăç пахђинелле пăхса, çапла кала пуçларĕ: Çамрăк йулташсем! Kураттăр-и есĕр, йепле кăнтăрлахи хĕвел йăвăç пахђи çине шăратса пăхат! Йепле унăн çутти, çамрăксем, сирĕн çине те савăнса пăхат! Анђх çав çутă йепле савăнтарнине пирĕн аттесем, пирĕн асаттесем лайăхăн пĕлеймен. Патшасем хушнипе вĕсене йаланах страшнĕксем, уратнĕксем, станавайсем хăратса пурăннă. Вĕсене вăрçă хирĕсене сурăх кĕтў пек хăваласа кайнă та, хамăр пек тăван çынсемпех çапăçтарнă... Вара вăрçăра етем йунĕпе çулсем кўллене кўллене кайнă... Пăшал пеме хăраса тăнисене йури пере пере вĕлерттернĕ, терĕ.

Çак сăмахсене каланă каламанах, Паљђан ђĕри кăрт сиксе илђĕ. Ăшшĕпе пиђђĕшĕ мĕнле вилнине аса илђĕ те, Паљђан куççулĕ тумласа анђĕ. Куççулне вăл шурă кĕпе аркипе шăлса типĕтрĕ. Вĕлерттернĕ... Вĕлерттернĕ, тенĕ сăмахсем Паљђа ăшĕнђен нумайђђен туха пĕлмерĕç.

Хуларан килнĕскер сĕтел умĕнђи пукан çумне тĕршĕнсе тăнă та, пĕрмай сăмах калаť:

— Халĕ ĕнтĕ пирĕн патша таврашĕ çук, тет вăл.—Анђах, çапах та, патша йĕркин тымарĕсем майлă вăхăт пулсан, каллах ђĕрĕлсе кайма пултараççĕ. Пирĕн, йепле те пулсан, çав тымарсене ђĕрĕлме парас пулмасť. Вĕсене пирĕн кашни сехетрех вĕри шыв сапса тăнђах хăртса йама тăрăшмалла. Çапла тума епĕр пĕрлешсе, вăйлă ушкăнсем, сойуссем туса анђах пултарăпăр... Вара пирĕншĕн пĕлĕт çинђи çутă хĕвел татах ăшшăн пăхса çутатма пуçлĕ. Хĕвел çутти айĕнђе епĕр пурте пĕр тăван пек пулса çĕнĕ, илемлĕ пурнăç тăвăпăр! тет.

Сăмах каласа пĕтсен, ађисен пит çăмартисем йăл кулса илђĕç. Ђўређерен кĕнĕ кăнтăрлахи хĕвел те, шкул ађисем çине пăхса, йăл кулса йађĕ.

— Ну, ађасем, çамрăксен коммунисла сойусне кам кăрекен пур? терĕ сĕтел умĕнђе кăранташпа хут тытса тăракан пĕр вăрăмрах вĕренекен ађа.

— Мана çыр... Епĕ кĕретĕп!.. мана-а-а-а... тесе кăшкăрнă сасăсем коритора йан йанăратса йађĕç...

Çамрăксен ушкăнне пирĕн Паљђа та çырăнђĕ. Çырăнса сĕтел патĕнђен пĕр-икĕ утăм кайсанах вăл хăй ăшĕнђе çапла каларĕ:

— Çĕнĕ, илемлĕ пурнăç тăвăпăр... Текех епĕр ђурасем мар, терĕ.

Ђўређерен кĕнĕ хĕвел çутти те коритор çтени çинђе, выљђаса илђĕ.

— Çĕнĕ, илемлĕ пурăнăç тăвăпăр... Сирĕншĕн епĕ тĕнђене татах хытă çутатăп! тенĕ пек пулђĕ.

## Мункун ернинҫе.

Мункун ернинҫе ернипех ҫан сасси:

— Тӗнкӗл-тинкӗл-тӑн-тан-н!.. Тӗнкӗл-тинкӗл-тӑн тан-н! тесе сывлӑша ҫурса, тата ҳӑй майӑн пӗтӗм таврари халӑха савӑнтарса тӑҫӗ.

Пӗр Васлей ывӑлне Мируна анҫах вӑл йӑлӑхтарса ҫитерҫӗ. Ҫан сасси Мирунӑн темле мӑшкӑлласа, йӗкӗлтесе илнӗ пекех туйӑнать.

— Тӑн-тан-н! Тӑнтаннисем килӗр!.. Тӑн-тан-н! Тӑнтаннисем, савӑнӑр! тенӗ сӑмах кӗввине йарса Мирунӑн хӑлхи шӑтӑкӗсене тек кӑтӑкла-кӑтӑкла илет.

Мирун кӑнтӑрла ҫитес умӗн ҫеҫ пупсемпе темскер мыскара туса илҫӗ. Ҫавӑнпа та ӑна ҫан сасси пушшех тарӑхтарать.

Ашшӗсем ирех пӗлӗш-тантӑшӗсем патне ҫӗреслӗ сӑрапа ӗҫме тухса кайнӑ. Киле Мирунпа сакӑр ҫулхи шӑллӗ иккӗшех йулнӑ. Ҫипер хӗвел-ҫаврӑнӑш хупписемпе урайне ҫӳплесе, типӗтнӗ мӑйӑрӗсене сак ҫинҫе калӑппа шак-шак! катса ларнӑ ҫӗртенех, шӑллӗ урамалла пӑхрӗ те, пӗҫӗк ҫинҫе сассипе:

— Пӑх-ха, пиҫҫе! Пупсем килеҫҫӗ, пупсем! тесе хыттӑнах кӑшкӑрса йаҫӗ.

— Есӗ пӳртрех лар. Епӗ тула тухса калам-ха, терӗ те пиҫҫӗшӗ, пуҫ ҫинҫи картусне лайӑхрах

пусса лартса, пиҫиххине хытӑрах ҫыхса, урама, хапха умне тухса тӑђӗ.

Кай йенђен, ђӑнах та, айакранах вӗл-вӗл йӑлкӑшса пыракан вӑрӑм елемсем, ђаплӑ турӑшсем курӑнах карӗҫ. Ҫара хӗрарӑм ушкӑнӗ хӑй майлӑ сасӑпа:

Христо-о-с вилӗмӗнђен ђӗрӗлнӗ...
Вилнисене ђӗрӗлӗх панӑ-ӑ...

тесе ӗнрешсе пырать.

Арҫынсенђен ушкӑнра пуппа теђук пур та, тата вилсессӗн тӳрех райа кайма хатӗрленекен калик сухаллӑ пуйан Ҫеркей Мӗтриййӗ пур. Урӑх пӗр арҫын ђунӗ те ҫук.

Арҫын ҫуккинђен пӗтӗм урамри ҫын тӗлӗнет.

— Елӗкрех пӗтӗм хут вӗренекен ађасем ҫӳретђеҫ. Хаљ пур—пӗли-пӗлми хӗрсем анђах ҫӳреҫҫӗ, тесе сӑмахласа илеҫҫӗ хӑшӗ пӗри...

Турӑшсем урам варринђен пӑрӑнса тӳрех Мирун умнелле пыра пуҫларӗҫ. Ҫара хӗрарӑм ушкӑнӗ пынине курсан, Мируна, хӑй кӗтмен-туман ҫӗртенех, ҫакӑн пек шухӑш килсе карӗ:

— Ех, терӗ вӑл ӑшӗнђе,—хӗрӗсем те, ватӑлса хӗр шутӗнђен туха пуҫланӑскерсем, хӑйсене кӑтартмашкӑн анђах ҫӳреҫҫӗ курӑнать. Ех-хех-хе-ех-х! мӑнтарӑн апӑршисем! тесе Мирун хӗрсене хӗрхенсе илет.

Турӑшсем ҫитрӗҫ.

Мирун вунҫиђ ҫулхи, вӑрӑмрах та, хура ађа Пупӑн симӗс те, сутӑ-сарӑ рисӗ ҫинелле ђӑл-ђал

пăхкалат Темшĕн, кăшт хĕрелсе кайнă пек пулат те, пупа хапхаран кĕме ђарат лартат.

— Епĕ сирĕн ултавлă тĕн тавраш не йышăнмастăп... урăх çĕрелле кайăр! тесе паттăрăн калат те, пĕђĕк хапхине шалт хупăнтарса, лешсене урам йенне тăратат хăварат.

— Антихрист!.. Турра хирĕç пырат... ытла иртĕнсе кайнă!.. Аçусене калатпăр! тенĕ сасăсем çеç хўме çурăкĕсем виттĕр Мирун хăлхи ăшне лайăх марăн вĕђĕлтеттерсе кĕђĕç.

* *
*

Пĕђĕк Мишша хапха умĕнђе мĕн пулнине веçех кантăк витĕр курса тăђĕ. Мирун пўрте кĕнĕ çĕре вăл, темшĕн ытлашшипех хĕпĕртесе ўкнĕ те, тĕпелти сак тĕлĕнђе, кађака путекки пекех, трăнкки те транкки сиккелеме тапратнă.

— Пăх-ха, пăх! тет те, вăр-вар сак çине хăпарса кайса пиђђĕшне кантăк витĕр таçталла пўрнипе тĕллесе кăтартат.

— Пупсем ђиперех карĕç. Пултараймарĕç сана хирĕç калама... Ех-ху-у-ех-х!!! тесе каллех урайĕнђе сиккелесе çўрет. Пиђђĕшĕ: Ђарăн! тесен те, ђарăнмаст.

Те шăлнĕ сикнĕрен, Мирун та хытă хĕпĕртет, унăн та сиккелесси килсе кайат. Анђах урамалла пăхнă пăхманах кăмăлĕ тепĕр майлă çавăрăнса ўкет. Леш калик сухаллă Мĕтри карђăкĕ, ватăскер, туйи çине тĕршĕннĕ те, урамăн леш айккинђе

Мирунсен килĕ çинелле пăхса, темскер сăмахсем каласа ылхана-ылхана илет. Макăрас килмен çĕр-тен макăрнă пек тăват.

Мирун карђăка ытлах çиленмерĕ, анђах çавăн-тах хăй пўртрен урама тухса карĕ.

— Клупа кайатăп, есĕ лар-ха, тесе хăварђĕ пĕђĕк Мишшине.

* * *

Акă Мирун урампа тăвалла ухат. Ђан сасси йĕкĕлтесе илмессеренех ăшĕнђе тарăхса пырат. Урам кĕтессинђе ларакан ђипер хĕрсем Миruна хăйсен ушкăнне ђĕнсе илесшĕн.

— Ах, Мирунĕ!... Мирунĕ! Пирĕн вăйа кĕрсе те тухасшăн мар, теççĕ те, кађђине илĕртсе илмеш-кĕнех, иккĕн-виççĕн алăсенђен тытăнса пăлтăр-палтăр çаврăнкаласа илеççĕ.

Хĕрлĕ те шурă çĕнĕ кĕпи аркисем вăркăшка-лани, кĕмĕл тенкисем шăнкăртатни Мирун ђĕрине ирĕлтерсех те йарасшăн, хĕрсен ушкăннеллех тур-тасшăн... Çапах та:

— Çук, халĕ пымастăп, тет вăл ђипер хĕрсене Хĕрсем, йăлкăм çутă та, çинçе пилĕклĕ хура кађђи ăçта кайассине пĕле тăрах, ăна мĕнле те пулин тытса ђарасшăн.

— Мирун, кала-ха: пађăшкана мĕншĕн кўртме-рĕн? Ай-ай-й! Апла йурат-и вара?! тесе Миruна пăртак тăрăхланă пек пулаççĕ.

— Сире мён ёç? тет те, Мирун малаллах уттарат.
Хёрсем те вара çёнёрен сămах мён хушмарёç...

* *
*

Клуп умне çара çамрăк ушкăнё кăткă йăви пекех сырăнса илнё. Çурхи хёвел ăшшинђе савăнса та йăшăлтатса тăрат. Мирун пынине курсанах:

— Ей, Мирун килет, Мирун!.. Мирун!.. тесе кăшкăрса илђёç.

Унтан пурте урлă урам варрине, тин çеç йешерсе тухнă симёс курăк çине капăр-р-р! пуçтарăнђёç те, салтаксем пекех, ретём ретёмён йёркеленсе тăђёç.

— Ну, пуçла, Мирун! тесе çухăрат пёр уçă ађа сасси.

Мирун малтан клуп йеннелле пăхса илђё. Клуп ђўређисем тăрёнђе хура хăма çинђе „Раççейри Çамрăксен Комунисла Сойусён йађђейкки“ тесе пурпа пысăккăн çырни таçтанах палăрса тăрат. Çтенисем çинђе пайан тёрлёрен тёне хирёç, мункуна хирёç çырнă плаккатсем çапса тултарнă...

— Ђасрах тытăн, Мирун! тет каллех тепёр сасă.

Мирун, пысăк çынла, сămахне калас умён ёхёк-ёхёк! ўсёркеленё пек турё те, мункун çинђеђ калама тапратрё. Итлекенсем ытти çёртен те нухăнаççё. Çамрăккисем те, çитённисем те пыраççё. Пёђёк пукан çине хăпарса тăнă çамрăк ораттăр, пурне те хăй тавралла пухса, пёр шухăшлă çирёп ушкăн тăвасшăн.

Вăл калать:

— Мункун пек праçник ĕлĕкех, Христос çураліҫҫенех, ҫи авалхи халăхсем хушшинҫе пулнă, тет.—Çав праçник çурхи хĕвел тĕттĕм хĕл кунĕпе кĕрешнине, хĕл кунне çĕнтернине, хĕвел çĕнтернĕ майĕпе пур ҫĕр-ҫун та, пур етем те хĕпĕртенине пĕлтерекен праçник пулнă, тет.

„Хĕвел" те, „хĕвĕл" тенĕрен итлекенсем пурте кăвак тӳпери хĕвел çинелле пăхса илеççĕ...

Сисмен те, турăшсен таçтан пырса аҫасем тĕлнех сикрĕç тухрĕç. Пуп куçĕсем ҫалтăрах саланса карĕç. Ним тăвайманнипе, Мируна итлеме пынă пĕр вăрăм, сухаллă çын умне çитсе тăҫĕ те, пуп вăрçнă сасăпах çапла калама тапратрĕ:

— Пурте хăвăр пирки пулать... Хăвăр есĕр ҫиркĕве çӳреместĕр. Тем ҫул каласан та, çак ернере ĕçмесĕр ҫăтаймарăр, тесе вăрăм çынна тек ӳкĕтлеӳкĕтле илет.

Мăшкăлланă пекех тата, урамăн анат вĕçĕнҫи пĕр ушкăн ӳсĕрсем йара паҫĕç ĕçкĕ йуррине:

Пурăннă ҫух ĕçери-и-и-и?<br>Йуррине те йурлари-и-и?<br>Вилсен йулĕ харама-а-а,<br>Хаљ ĕçер те, хаљ йурлар-р-р!

Пупа хирĕç вăрăм çын та, хыттăн илтĕнмеллех, çапла каларĕ:

— Епĕ мĕн пĕлеп ĕнтĕ? Тăмран тунăпа пĕрех... Кам пĕлет: тахăшинне ĕненмелле?.. Ҫиркӳне каймасни хамăн та нумай пулать.

Пуп тутине мăкăртрĕ. Урăх ним те ђĕнмерĕ. Ӳркенсе утнă пек пулса, турăшсем хыççăн йерипен танклаттарђĕ.

Мирун вăрăм çӳçĕн ĕç тухманнине сухаллă çын сăмаххисенђенех сисрĕ. Сисрĕ те, пушшах хăпартлanca калама тапратрĕ.

— „Христос вилĕмĕнђен ђĕрĕлнĕ" тенĕ вырăнне „хĕвел вилĕмĕнђен ђĕрĕлнĕ" тени тĕрĕсрех пулĕ, тесе пĕтерђĕ çамрăк ораттăр.

Итлекенсем:

— Çăт-çат!.. Çăт-çат! çатлаттарса ăлсем çупаççĕ. Йутран курма пынисем ку ађасенђен тĕлĕнсе хытсах кайнă.

— Тавай, Мирун, çĕнĕ мункун йурри йурлăпăр! Акă епĕ сăмаххисене çыртăм, тет те пĕр ађи, çырнине ыттисене çавăнтах вуласа кăтартат.

— Тавай!.. Тавай!.. теççĕ сасăсем.

— Тавай урам тăрăх йурласа кайăпăр.

Пуçларĕç йурлама:

Хĕве-е-л-л вилĕмĕђен ђĕрĕлнĕ,
Вилнĕ куна, хĕл кунне çĕнтерсе
Вилнисене ђĕрĕлĕх панă-ă!
Хĕве-е-л-л вилĕмĕнђен ђĕрĕлнĕ,
Çурхи куна, çут куна çутатса
Çут тĕнђене ђĕрĕлĕх панă-ă!

. . . . . . . . . . . . . .

Хĕве-е-л-л вилĕмĕнђен ђĕрĕлнĕ,
Вилнĕ куна, хĕл кунне çĕнтерсе
Вилнисене ђĕрĕлĕх панă-ă!..

Йурăпа цĕтĕм урам хушши йанăрса пырат̆. Кукакансем тата нумайланса çитрĕç. Хайхи ђипер хĕрсем те йурлакансем хыççăн çутăлса-кулкаласа пыраççĕ.

Мирун йурлакансемпе пĕрле хутăшса кайнă та:

— Çамрăк мĕн тумĕ вăл?.. Епĕр пултаратпăр!.. Пултаратпăр! тенĕ шухăшне нийепле те пуçĕнђен кăларса йараймаст̆.

— Мĕн ĕçлеççĕ-ши кусем?.. Ах, ухмахсем! теççĕ те, те хăранăран, йерипен пăшăлтатса пыраççĕ çурхи ђеђек пек хитре хĕрĕсем.

Пĕр-ик-виç ўсĕр хыçалта тем каласа вăрçса йатлаçса йулђĕç.

Ытти ўсĕр ушкăнĕсем нимне пĕлмесĕрех пăхапăха иртеççĕ.

Çамрăксен йурри хăйсем пекех паттăрăн кĕрлесе пырат̆; хирĕçле вăйсем, пуçĕсене хăпартлама тытăнаççĕ те, хăйсемех парăна-парăна илеççĕ.

Хĕве-е-л-л вилĕмĕнђен ђĕрĕлнĕ,
Вилнĕ куна, хĕл кунне çĕнтерсе
Вилнисене ђĕрĕлĕх панă-ă!

тени пурне те парăнтарат̆.

Йурă çĕмĕрĕлнĕ майĕпе Мирун ђан сасси йекĕлтенине те манса кайат̆. Ђан сассисем, турăпсем, хăйамађĕсем. Мирунпăн ытла та вăйсăр, шеллемелле йапаласем пек анђах туйăнса кайаççĕ.

## Çĕтĕк-сăхман.

Шупашкар пристăнĕ. Тепаркатĕрĕн леш йенђи хĕррипе пĕр-ик-виç пассашир каллĕ-маллĕ уткаласа çÿреççĕ. Кĕрхи сивĕ çил вĕрнĕ майĕн Атăл çиййĕ те сиввĕн ђĕтренсе тăраť. Ту йенђен хулăм çăмăр пĕлĕђĕсем капланса килсе таçта анаталла ирте-ирте кайаççĕ.

— Ай кармашса çитсе çаплипех çĕре ўкересђĕ пĕлĕтсене.

— Йероплана пўлаť.

— Темĕн çав...

Çапла калаçса илђĕç те пассаширсем, анат йенђен пăрахут кăшкăртса йађĕ.

— „Лермонтов" килет.

Пăрахут, ђăнах та, „Лермонтов" йатлă. Ђасах пристăне çитсе ларђĕ. Пăрахутран, ытти çынсемпе пĕрле, пĕр çĕтĕк сăхманлă лутра, сарă ађа вĕçтерсе тухрĕ. Мăйне луђăрканса пĕтнĕ хĕрлĕ хăмаçпа çавăрса çыхнă. Аллинђе пушă çăкăр хутаççи. Çĕтĕк сăхманне йўле йанă. Çынсем ăна ђăр-ђар пăхса илеççĕ.

— Пионер-и есĕ?

— Пионер.

— Ăçта кайатăн?

— Шупашкара килтём.

Пионер паттăр каласаť. Хăрамасť, йутшăнмасť. Кулкалаť кăна.

— Мĕн йатлă?

— Васук. № йалĕсем, Çĕрпӳ уйесĕ. Атте килтен хăваласа йаҕĕ... Ăçта кунта Опкомол?

Епĕ ăна Опкомол тĕлне кăтартса йама пултăм. Шупашкар тăвĕ çине хăпарса çитсен, Васук пионер мана кăсйиҕҕен пĕр хут татăкă кăларса кăтартрĕ. Акă вăл:

Х а р а к т е р и ç т и к к ă.

Максимăв, В. М., 1910 çулта... ҕи ҕухăн çемйере çуралнă... 7 çулта тĕван амăшĕнҕен йулнă. Килте тарçă вырăнĕнҕе ăçлесе пурнаť. 8 çула çитсен килтисенҕен вăрттăн шкула тухса тарнă. Унта вара 1921-мĕш çулхи выçлăхҕен вĕреннĕ. 1922-мĕш çулта Мускаври аҕа çуртне кайнă.

Çав çулах, Мускавраӊ таврăнсассăн, Максимăв каллех шкула вĕренме кĕнĕ. 1924-мĕш çулта майăн 7-мĕшĕнҕе комсомола çырăннă...

Вăл çак ĕçсенҕе пит тăрăшса ĕçленĕ:

1. 1924-мĕш çулта йуљрен пуçласа пайан кунҕенех комсомлăн çтена хаçатĕнҕе;

2. Çав çултах октапăртен пуçласа 3 уйăх хушши йаҕҕейккă пӳровĕнҕе;

3. 1925-мĕш çулта мартран пуçласа Лунаҕарски йаҕĕпе усăлнă пионерсен отретне йертсе пыраť;

4. Шкул канашĕнђе йалти комсомол йађейккинђен претставиттĕл пулса тăнă;

5. Йалхуçайстви, тата тĕне хирĕç крушоксенђе, пионерсен хаçатĕнђе, испă-ђиттаљнăра, тата ытти ĕçсенђе те пит тăрăшса ĕçленĕ.

Максçимăв йулташ пит йĕркеллĕ, тăнлă, оркаписатсисенђе пит ĕçлеме пултаракенскер.

РÇЛКС № йалĕнђи йађђейккăн
ответ. çекреттарĕ *И. Алекçейĕв.*

Пўро ђленĕсем { *Танилăв.* *Куçмина.*

19/VIII 25.

Вуласа пĕтернĕ çĕре айалта пăрахут виççĕмĕш хут çвисток пађĕ. Çăмăр пĕлĕђĕсем сарăлса пыраççĕ. Ту çинђе кĕрхи сивĕ çил тапхăр-тапхăрăн çурăм виттĕр çапса илет. Ваçук çинђи çĕтĕк сăхман аркисем çилпе вĕçеççĕ... Пăрахут тапранса карĕ. Ураписем Атăла çурма тапратрĕç.

— Сыв пул, „Лермонтов“!

Çĕтĕк сăкманлă паттăр пионерăн хăй ларса килнĕ пăрахутĕнђен уйăрлас килмест. Пăрахут малалла кайаť—Ваçукăн та мĕншĕн кайас мар?.. Пăрахут кайнине вăл хурланса пăхса йулђĕ.

---

Опкомол. Çутăлăх Комиссариађĕ. Ађа çурђĕ. Виçĕ çĕре çитнĕ Ваçук. Виççĕмĕшĕнђе саветушђине

тёл пулайман—таçта тухса кайнă. Ыттисем каçпа пыма каланă. Ваçук хĕпĕртесе ӳкнĕ. Ман хваттере пырса кĕнĕ-кĕменех, кăсйинђен вăл тепĕр пĕђĕк-çеççĕ шурă хут татăкĕ туртса кăларђĕ.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Вăхăтлăха, шкул-комунăра вĕрентме пуç-
лиђђен, çак . . . . йулташа . . . . .
ађа çуртне вырăнаçтарма хушатпăр,

тесе çырнă.

Ваçукăн пиђĕсем кулаççĕ, куçĕсем çутăлса илеç-çĕ, урисем пĕр вырăнта тăма пĕлмеççĕ. Çитнĕ савă-нăç, вĕçĕ-хĕррисĕр савăнăç!..

Ваçук йалтан тарнă. Усал, ылханлă киле пăрах-са хулана килнĕ. Çул укçи йађђейккă тупса панă. Ашшĕ пĕр пус та паман. Ашшĕ вăрçса хăй ывăлне хăй килтен хăваласа кăларнă.

— Урăх киле килнĕ ан пултăр. Камсумулсем тăрантĕç... Кай ђасрах! тесе хапхаранах ăсатса йанă.

Çамрăк ама çури хӳме çурăкĕ виттĕр хĕпĕртесе пăхса йулнă. Пĕђĕк йăмăкĕпе пĕђĕк шăлнĕ макăр-ма тăрсан, ашшĕ çавăнтах хулăпа хăмсарса илнĕ.

— Йала текех нихăçан та кайас марђĕ... нихă-çан та.

— Мĕншĕн?

— Пĕтереççĕ унта мана... Ама çури пĕтерет. Атте ун майлă, тет Ваçукăн хăй пекех пĕђĕк, уçă сасси.

Килти çинђен нумай калама йуратмаст. Хăй ху-лана тарса килнĕ пек, сăмаххисем те № йалĕнђен,

çуралса ўснĕ килĕнђен таçта пит инçете... Мускав йеннелле тарса ўкеççĕ.

— Киле йамалла туман пулсан, Мускавах йуласшăнђђĕ...

Çĕтĕк-сăхман хулана йуратса кайнă. Мускав!.. Мускав!.. Йепле вăл паттăрăн илтĕнет! Йепле тата айакранах ађашшăн илĕртет!

*Москва, б. Садовая, д. № 7*
*детдом № 36.*

Çăвăн пек Мускавра пурăннă ђухнехи атрĕсĕ. Икĕ хутлă шурă çурт. Апат çималли, ваннă тумалли, çывăрмалли, выљамалли пўлĕмсем, тата кашни 50 ађа ваљђи ăрасна пуђнитсă. Ирхине ђей (сахăрпа, çупа, çăкăрпа). Икĕ сехетре йашка, ун хыççăн пăтă (вир йе пăри, хура тул пăтти). Тăваттăра ђей, ирхинехи пек. Каçхине каллех пăтă. 10—11 сехетсенђе салра, ăшă ђух—пахђара, вăйăсем пулнă. Йурăсем йурланă. Пĕр йуррине Ваçук мана та йурласа пађĕ.

Пĕр хĕр шыв хĕррипе пынă,
Кăвакала патакпа хăваланă.
— Утах, утах, кăвакал, килелле!
Киле çитсен хуçана суттарăп,
Çитмĕл пуса суттарăп, суттарăп;
Вунă пуслăх шăпăр калама тытăп;
Кала, кала шăпăрна, шăпăрна
Хуйхăм-суйхăм ђĕререн сирĕлĕ...

Мускавра пурăннă ђухнех, Ваçука комсомола кĕрес шухăш çавăрса илнĕ. Косомолсем урампа

йурласа иртсе кайни ӑна хаваслантарнӑ. Вӗсем йурлани Ваçуксеннинђен вирлӗн туйӑннӑ. Сӑмаххисем те хӑватлӑн илтӗннӗ. Параппансем йурӑсене вӑй кӳртсе пынӑ. Пуринђен ытла:

— За-а вла-а-а-сть сове-е-е-тов, тесе йурлани Ваçука хӑпартлантарса йанӑ.

Пӗрре, çавӑн пек, йала таврӑнсассӑн шкулта пуху пулнӑ. Май уйӑхӗн 1-мӗш кунӗ çинђен токлат тунӑ. Итлеме Ваçук та пынӑ. Çавӑн хыççӑн вӑл пӗр ерне ернипех комсомол çинђен шухӑша кайса çӳренӗ. Йулашкинђен, 7-мӗш ђислара, Ваçук урӑх тӳсеймен: йалти йађђейккӑ пухӑвне кайнӑ та, комсомола кӗнӗ. Çавӑншӑн ашшӗ ӑна, пухуран килсессӗн: Ӑçта çӳретӗн есӗ? тесе тытса хӗртнӗ. Ама çури елеклесе татах хытӑ хӗнеттернӗ.

Шкулта вӗренекен ађасенђен комсомолра никам та тӑман. Çавӑнпа пурте малтанах Ваçука тӑрӑхлама пӑхнӑ. Çапла, пӗрре, çтена хаçатӗнђе Ваçукӑн сӑвви ӳкнӗ пулнӑ. Сӑвӑ хыççӑн ретактӑрӗ:

**Çамрӑк комунис Ваçук**,

тесе çырнӑ лартнӑ.

Çитнӗ вара вӑл Ваçука тӑрӑхламашкӑн. Анђах, тӑрӑхласси нумайа пыман. Шкула çӗнӗ вӗрентекен килнӗ. Ваçукшӑн çул аслансах кайнӑ.

Ваçук, çӗтӗк сӑхманлӑ, пӗђӗкçеççӗ, лутра, сарӑ ађа, тапратнӑ ӗçлемешкӗн. Унӑн йађӗ пӗтӗм йала сарӑлнӑ.

— Çавӑн пеккисем ӳссессӗн, пӗтереççӗ вӗт вӗсем... Вӗсемпе йепле кӗрешен? тенӗ ун çинђен йалти ватӑсем.

— Çĕтĕк-сăхман пултарать! тенĕ тата хăшĕ.

„Çĕтĕк-сăхман“ тесе ашшĕпе çамрăк ама çури каланă.

— Камсумула кĕнĕ пирки пĕр тумтир те туса памастпăр, тесе сăмах панă.

Çĕтĕк-сăхман хăраман. Вăл ђăнах та пултарнă иккен. Характеристиккăра кăтартнисем пурте тĕрĕс, пĕри те суйа мар...

---

Çĕтĕк-сăхман халĕ шкул-коммунăна вĕренме кĕнĕ. Каçхине вăл, çывăрма выртас умĕн, виçĕ çыру çырса хатĕрлерĕ: пĕрне—хăйне вĕрентнĕ йалти уђитлĕ патне,—ађасене лайăх, çĕнĕлле вĕрентнĕшĕн тав туса çырђĕ; теприне—шкул ађисене,—тăрăшса вĕренме, йађђейккă, çтена хаçаđĕ ĕçĕсене вăйлатма ђĕнсе çырђĕ; виççĕмĕшне—йалти йађђейккăна хăй вырнаçни, килти тамăкран хăтăлни çинђен пĕлтерсе çырђĕ.

Вара çывăрма выртрĕ. Ађа çуртĕнђе ăна кравать лартса панă. Улăм тӳшек, утийал,—çывăрма лайăх. Ытти ађасем сăмахлаççĕ, шавлаççĕ. Çĕтĕк-сăхман вĕсене итлемест. Вăл каллех хулана килсе вырнаçнинђен тĕлĕнсе, хĕпĕртесе выртать. Вăл киле йулнă пĕђĕк йăмăкĕпе пĕђĕк шăлнĕ çинђен шухăшлать.

— Вĕсене те кунта кӳресђĕ, кунта... хулана...

Çав йăвăр шухăшсем Çĕтĕк-сăхмана пусса илђĕç. Çĕтĕк-сăхман çывăрса карĕ.

---

## Ђалăш пӳрт.

Уӊ пирки епĕ пĕрре, хăй çутнă çутманах, çекреттарпе тавлашса илтĕм.

— Мĕнех вара санăн сипленĕ пӳртӳ? Тул йенђен пăхсан, ним илемĕ те çук: урамĕ те ђалăш та, вăл та ђалăш лараť, анат вĕçне хăпартнă, ту йенђиӊе çаплипех хăварнă,—мĕн майĕ пултăр вара апла сипленин? Çук, ун пек сипленĕ пӳртпе епĕ килĕшместĕп: клуп-тăк—клуп пултăр вăл! Тулашĕ те илемлĕ пултăр! Çын куçĕ пăхса савăнмалла пултăр! Ăна вара „клуп“ теме те йураť. А ку—мĕскер ку? Сипленĕ кивĕ пӳрт те—сипленĕ пӳрт, çитменне тата—ђалăш пӳрт, алăкĕ те ђалăш пулас. Урамĕ те ђалăш. Веçех ђалăш...

Епĕ тӳрĕ калани вулйађейккă çекраттарне пĕре те килĕшмерĕ. Ăçтан килĕштĕр ĕнтĕ ăна! Вăл хăй сиплеттернĕ вĕт! Вăл çав хăрăк пӳртрен клуп туса лартасшăн пулнă...

Вăл мана çиленђĕ.

— Ху ђалăш есĕ! терĕ.

Çекреттар хваттерĕнђи тата икĕ йулташ çавăнтах ахăлтатса йађĕç. Ђалăш пӳрт пирки хама та „ђалăш“ теме тытăнђĕç. Ăçтан ђалăш пулатăп-ха епĕ?

— Сипленĕ пӳрт ђӑнах ђалӑш вӑл. Урамĕ те ђалӑш. Веçех ђалӑш...

Апла каласан, йулташсем пушшах каçса кайса кулма тапратрĕç.

— Ђалӑш!

— Ей, ђалӑш!

— Ей-й!.. тесе тӑрӑхлаççĕ мана.

Мĕн тӑвас кусене? Мĕнпе ђарас? Аптӑранӑ йенне хирĕç ђĕнми пултӑм: çиленнĕ пек ларатӑп... Тинех пӑрахрĕç вара çынран кулмашкӑн.

Çекреттар, çирĕм тӑватӑ çулхи йаш ађа, сарӑ, кӑтрарах çӳçлĕскер, ђалӑш пӳрте вӑхӑтлӑха кӑна сиплесе лартни çинђен, клуп çуртне хаљтерехех çĕнĕрен тӑвасси çинђен каласа лӑплантарђĕ. Хӑйĕн çтена хаçатĕнђи карттинĕсене, клупра çапса хумашкӑн хӑйех çырнӑ тиакрамĕсене кӑтартрĕ.

— Пултаратӑн, пултаратӑн, терĕ ӑна вара пуçĕнђен шӑлан пек туса, хура сухаллӑ Йурмиллĕн, вӑрӑмскер, вырӑс, комунис, уйесрен суйлавсем иртерме килнĕскер.

Унтан тӑватсӑмӑр та,—çекреттар, Йурмиллĕн, тата епĕр, Йермилӑв йулташпа иккĕн, шеф йĕркипе килнĕскерсем,—ђалӑш пӳрте веђђӑра карӑмӑр. Тулта йĕпе йур тӑманлӑ хутӑш çӑваť. Питсене çапа-çапа илет. Салтак ађи, тутрисене вĕçтерсе, виçĕ лашапа йурласа иртсе карĕ. Ӑна курсан, пирĕн Йурмиллĕн:

— Тратитси çав... тратитси ђас улшӑнмасť, тесе йулђĕ.

Вулйађейккă çекреттарĕ те ўпкелешсе илђĕ.

— Комиççийе кайађђен салтака ђĕнмелли ађасене пурне те вулăса пухса конферентси тунă. Çапах итлемеççĕ...

Йурмиллĕн хăйĕннех:

— Тратитси çав... тратитси... терĕ.

Ђалăш пўрт алăкĕнђен кас-кас çын сывлăшĕ пăсланса тухать. Халăх нумай пухăннă пулмалла. Алăкне уçрăмăр та, картлашкапа,—пĕр аршăн ытлашшипех пулĕ,—айалалла анса тăтăмăр. Ђалăш пўртре ђăваш ађисем, пионерсем, туп-тулли тулнă. Килти хура кĕпесемпех, саплăклăскерсемпех, çăпатасемпех. Хăшĕ ытла пĕђĕккисем пур, шĕшлĕ пулă пеккисем, хăшĕ мăннисемех. Хăшĕ çара пуçăн, хăшĕ сурăх тирĕнђен çĕлетнĕ çĕтĕк мулаххайпала. Хăшĕн пиçиххийĕ пур, хăшĕ пиçиххисĕрех. Вĕсене те çекреттар йертсе пырать: йурлаттарать, выђаттарать. Анђах хăйсен комантирĕ те пур: пĕђĕк комантир, паттăр комантир. Ђăн-ђăн комантир пекех, комантăсем парать, аллисемпе сулла-сулла кăтартать.

Çи-пуçĕсене пăхсассăн, тиккар, тискер çын ађипăђи, темелле. Ђăнах та тискер шăршă пур вĕсенђе. Вĕсен вăйĕсем те хăшĕ—тискер вăйăсем: пĕрпĕрин çине купалана-купалана лараççĕ, тискеррĕн шăхăра-шăхăра илеççĕ. Анђах куљттурă шăрши те çапнă вĕсене: вĕсем,—те вырăнти интеликентсенђен вĕреннĕ,—хула ташшисем, ваљссем, пољккăсем ташлаççĕ, хула йуррисем, револђутсилле йурăсем йурлаççĕ...

Ђалăш пўрт тĕлĕнтерсех йађĕ.

Ђалăш пўрт урмаллах урса кайнă.

Вăл урнине пăхса тăрса ман пуçăм çавăрăна пуçларĕ. Стсенă çывăхĕнђе, çтена айăккисемпе вулăс ђенттăрĕнђе пурăнакан интеликентле хĕрарăмсем, арçынсем ларса тухнă. Çавсенђен пĕрин çине, пĕр хурарах, илемлĕ, çутă пит-куçлă хĕрарăмĕ çине тĕллесе пăхрăм та епĕ, унăн пиђĕ çинђе çакна вуларăм: ђыссăр... ђыссăр! тепĕр йенђен, хăйуллă... хăйуллă вĕсем! Ђăнахах пултарĕç-ши куђттурăна çавăрса илмешкĕн? Тискер... тискер! Тепĕр йенђен, паттăр... Хастарлă вĕсем! Ђăнахах пултарĕç-ши?..

Çавăн пек шухăшлаť интеликентле хĕрарăм. Пĕрре вăл, çав „тискер“ ађасенђен йĕрĕннĕ пек пулса, вĕсенђен урăх йеннелле пăрăна-пăрăна лараť. Унтан, нумай та тăмасť, ђалăш пўрт урса кайнипе каллех килĕшнĕ пек пулаť. „Тискер“ ађасен вăйĕ çине, ўркенкелесе, пĕрре сиввĕн, тепре ăшшăн пăхма тытăнаť. Вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ,- хура çамрăк çын, вĕçкĕнтерех, калстукпала, хура кĕрĕкпеле, те ађа шухăшĕ кĕнĕрен, пукан илсе пионерсен карти ăшне вăйпах кĕрсе ларђĕ те, пуçларĕ ађасемпе выђамашкăн. Ађасем мĕн тăваççĕ—вăл та ăна тăваť. Йурлаť, шăхăраť. Виçерен те тухса кайаť, аллисене ытлаши сулла-сулла йараť, ађасен çĕтĕк мулаххайĕсене çапа-çапа ўкерет. Ташлаť, сикет... Ăна курсан, интеликентле хĕрарăм пуçне пĕтĕмпех çĕрелле усрĕ.

— Тискер... Тискер! тесе çутăлђĕç хура куçĕсем.

— Ур-ра-а!.. Ур-ра-а! кăшкăрса йађĕ çавăнтах пионер ушкăнĕ. Хура кĕрĕклĕ, калстуклă претçетаттĕле пуç тăррисене хăпартса лартнă та, урра кăшкăраççĕ,

— Тавай пире коçтумсем... пионер коçтумĕсем!

— Йуратĭ, парас! тет ташласа ăшша пиçнĕ претçетаттĕл.

Паттăр пионерсем ыттисене те урра çĕклеççĕ. Хăйсене пулăшма пултаракана пĕрне те хăвармаççĕ. Урса кайнă ђалăш пўртре вĕсенђен ниçта тарса пытанмалли çук. Алăк хыçне пытанатăн-и, стеснă хыçне кĕретĕн-и,—пур çĕрте те шыраса тупаççĕ.

— Ур-ра-а!.. Ур-ра-а! Тупса парăр параппан!

— Парас, парас! тет шеф Йермилăв.

— Ур-ра-а!.. хутсем, кăранташсем илсе парăр.

— Калстуксем!

— Шăхлиђă!

— Ур-ра-а!..

Епĕ йалав илсе пама пултăм, Йурмиллĕн—шăхлиђă, ыттисем—хут, кăранташ, кĕнеке... Пионерсем вара,—килти хура кĕпеллĕскерсем, çăпаталлăскерсем, çĕтĕк мулаххайлăскерсем,—пионер кимĕнне йанăраттарса киле саланђĕç. Хурарах, илемлĕ, çутă пит-куçлă интеликентле хĕрарăм вĕсене тĕлĕнсе кăна пăхса йулђĕ.

Епĕр те, тăватсăмăр,—çекреттар, Йурмиллĕн, Йермилăв, тата епĕ,—хваттере таврăнтăмăр.

— Вот „ђалăш пўрт“ те вара. Ђалăш пўртре кулђттурă ађисем çуралаççĕ.

— Да! тере Йурмиллĕн Йермилăва хирĕç.

Епĕ шарламарăм. Епĕ ђалăш пўрте малтанах хăртса тăкнăђђĕ. Халĕ ĕнтĕ ун пирки йулташсем умĕнђе урăх сăмах калама та хăрарăм. Халĕ епĕ, ђалăш пўрте мар, хама хамах „ђалăш“ шутне кўртсе йатăм. Ђалăш пўрт пĕре те ђалăш мар. Урамĕ те ђалăш мар. Ним те ђалăш мар... Хам епĕ... пĕр хам кăна йапалана ђалăш куратăп...

Йермилăвпа çекреттар ђасах çывăрса карĕç. Вĕсем ывăннă: çекреттар кунĕпех ăçта кирлĕ унта ђупса çўресе, тата пионерсене вĕрентсе ывăннă, Йермилăв—шеф йалĕнђе токлатсем мĕнсем туса. Епĕ те çывăрас тесе тăрăх сак çине, айа хаçатсем сартăм та, ђавсаланса выртрăм. Пĕр хура сухаллă вăрăм Йурмиллĕн кăна сĕтел хушшинђе партти ресоЉутсиййĕсене, постановленийĕсене хыттăн вуласа ларать.

— Итле! тет мана.

— Йурать! тетĕп.

Анђах епĕ итлеместĕп. Манăн пуç урăххи çинђен шухăшлать. Ђалăш пўрт ђалăш марри... пионерсем, ађа шухăшне кайнă претçетаттĕл, пĕрре сиввĕн, тепре ăшшăн пăхакан интеликентле хĕрарăм... тискер шăршăпа куЉттурă шăрши çăрăнса кайни нумайђђен пуçа çавăрса тăђĕç.

1925.

# ТУПМАЛЛИ.

*Стр.*


1. Пирĕн вăй!.. вăй!.. . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Пађђа . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
3. Мункун еринђе . . . . . . . . . . . . . . 39
4. Ҫĕтĕк-сăхман . . . . . . . . . . . . . . . 47
5. Ђалăш пӳрт . . . . . . . . . . . . . . 51